Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТАБĔР 29 ШАМАТКУН
250 (5063) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать   ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ   Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—97, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

СЫВĂ ПУЛТĂР 20 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ЛЕНИНЛА-СТАЛИНЛА КОМСОМОЛ!

Чаплă йубилей

Пайан сталинла çамрăк ăру, пĕтĕм совет халăхĕ ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнине уйавлаççĕ.

1918 çулта октаберĕн 29-мĕшĕнче Çамрăксен Социалисăмлă Сойузĕсен Пĕтĕм Российăри пĕрремĕш сиесĕ пуçтарăннă. Çак сиес В. И. Ленин тăтăшах хутшăнса ĕçленипе тата йертсе пынипе пулса иртнĕ, комсомола туса хунине политикăлă тата организацилĕ çирĕплетсе хăварнă.

Унтанпа 20 çул иртрĕ. Çирĕм çул хушшинчи кĕрешӳпе ĕçре ленинла-сталинла комсомол пирĕн çĕршывра питĕ пысăк политикăлă вăй пулса тăчĕ. Вăл хăйĕн ретĕнче Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, коммунисăмшăн, совет халăхĕн телейĕпе савăнăçĕшĕн, унăн пуйанта куљтурăлă тата ирĕклĕ пурнăçĕшĕн пĕтĕм революцилĕ хастарлăхпа кĕрешекен 6 мĕлйун çурă совет патриочĕсене пĕрлештерсе тăрат. Комсомол ПСК(б)Партин чи çывăх, чи шанчăклă помошникĕ, унăн хăватлă резервĕ пулса тăрат.

Граждăн вăрçи вăхăтĕнче шурă çарсене тата интервентсене пуçĕпех аркатса тăкма комсомол виçĕ хутчен мобилизаци туса ирттерет, Хĕрлĕ Çар ретне, çапăçу фронтне 25 пин комсомолĕца ăсатат. Çак кĕрешӳре хăйĕн паттăрлăхне кăтартнăшăн комсомол Хĕрлĕ Йалав орденĕ илет.

„Коммунисла çамрăксен сойузĕ ударлă группă пулса тăмала, унăн пур ĕçре те хăйĕн пулăшăвне, хăйĕн пуçарулăхне палăртмала“ (Ленин). Ленин кăтартса панине асра тытса, коммуниссен партийĕ йертсе пынипе „комсомолăн ударникĕсемпе ударницисем çĕнĕ савăтсен, хапрăксен, шахтăсен, чукунçулсен, совхозсен, колхозсен строителствине тапхăрĕнче хăйсене мухтавпа витрĕç“ (Сталин). Комсомол социалисăмлă ăмăртăва пуçарчĕ.

Комсомолăн VIII-мĕш сиесĕнче Сталин йулташ „Ăслăлăха алла илмеле, пĕлĕвĕн пур отрăçлисем йенĕпе те болшевикла специалиссен çĕнĕ кадрĕсене вĕрентсе çитĕнтермеле, вĕренмеле, вĕренмеле, çине тăрса вĕренмеле“, тесе кăтартса пачĕ. Хăйĕн пĕтĕм ĕçне Сталин кăтартса панă пек çĕнетсе комсомол хăйĕн чи лайăх ывăлĕсене темиçе пиншерĕн вĕренме йарат, социалисăмлă ăмăртăва тата анлăрах, тата тарăнрах сарса йарат, çĕнĕ техникăна алла илессишĕн паттăрла кĕрешет, индустрин çĕнĕ гиганчĕсене тунă çĕре 350 пин комсомолĕца мобилизацилет. Совет правителстви комсомолăн ĕçне пысăк хак парса, ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ парат.

Комсомол совет государстви системинче пысăк вырăн йышăнса тăрат. ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн депутачĕсем хушшинче 284 çын çамрăксем. Пирĕн Чăваш республикинче кăçалхи çул 600 комсомолĕца государствăн ответлă ĕçĕсене лартнă. ССРС Верховнăй Советне, сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлас умĕн 2.594 комсомолĕц агитатăр пулса, 1.403 комсомолĕц округсемпе участкăсен суйлав комиççийĕсенче ĕçлерĕç. Чăваш ĕçхалăхĕ 18 комсомолĕца хăйĕн депутатне суйларĕ.

Хăватлă стаханăвла йухăма комсомолĕцсемпе рабочи çамрăкĕсем пуçарчĕç. Чукунçул транспăртĕнче комсомолĕц Кривонос, пир-авăр промышлĕннăçĕнче Иевдокийапа Марийа Виноградăвăсем, колхозлă йалхуçалăхĕнче Марийа Демченко, Паша Ангелина, шыв транспăртĕнче комсомолĕц-механизатăр Блидман стаханăвла йухăма пуçарса йачĕç. Чăваш комсомолĕ пăхса çитĕнтернĕ комсомолĕцсем, йалхуçалăх стаханăвĕцĕсем—Коротков, Данилăв, Куликов, Григорйĕва йулташсем совет правителствинчен чи пысăк наградă—орденсем илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Комсомол, коммуниссен партийĕ, Сталин йулташ йертсе пынипе, йаланах халăх тăшманĕсемпе çивĕччĕн кĕрешсе пынă, вăл хăйĕн ретĕнчи троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла шпионсене тата диверсантсене пуçĕпех çапса аркатрĕ, малалата çĕмĕрсе пырат.

Ленин—Сталин партийĕ çамрăксене тĕллеве уççăн ăнланма, характĕрĕпе вăйлă пулма, çĕнтерессине ĕненсе тăма, пĕтĕм вăйа социалисăм ĕçне пама, паттăр, чăтăмлă пулма, халăх тăшманĕсене курайми пулма, воспитани парса вĕрентет. Пирĕн çамрăксемшĕн социалисăмлă тăван çĕршыва ниме хăрхенмесĕр хӳтĕлесси, унăн вăйĕпе хăватне, унăн пурнăçĕпе чапне тĕреклетесси чи таса та тăван ĕç пулса тăрат. Акă мĕншĕн ĕнтĕ Инçет - Хĕвелтухăçĕнчи фронтăн геройĕсем Йапони самурайĕсене хирĕç атакăна карĕç, çĕнтерӳ турĕç, социалисăмлă тăван çĕршывăн никам пырса тĕкĕнейми чиккисене сыхласа хăварчĕç. Хасан кӳлли патĕнчи çĕнтерӳре чăваш комсомолĕ пăхса çитĕнтернĕ В. П. Винокурăв йулташ хăйĕн геройлăхне кăтартрĕ, ăна совет правителстви Совет Сойуз Геройĕ йатне пачĕ. Ку ĕнтĕ питĕ пысăк чыслăх, вăл пĕтĕм Чăваш комсомолĕцсемпе çамрăксене ССРС оборонине тĕреклетессишĕн, Хĕрлĕ Çар ретне тăма чăн-чăн патриотсене хатĕрлессишĕн тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарат.

Пĕтĕм тĕнчери революцилĕ çамрăксем миршăн, ирĕклĕхшĕн, социалисăмшăн кĕрешме, фашисăма хирĕç хăйар кĕрешме пĕрлĕхлĕ фронта пĕрлешнĕ. Епĕр вĕсемпе пĕрле!

Ленинла-сталинла комсомол коммуниссен партийĕ йертсе пынипе хăйĕн ретĕнче малашне те çамрăк патриотсене, социалисăмлă тăван çĕршывăн тивĕçлĕ граждăнĕсене, пирĕн тăван болшевикла партине тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçне аслă Сталина вĕçĕмсĕр парăннă çынсене мĕлйун-мĕлйунĕпе ӳстерсе пырĕ.

Сывă пултăр ПСК(б) Партин чи шанчăклă ăрувĕ ленинла-сталинла комсомол!

КОМСОМОЛА САЛАМ!

Академик В. Р. ВИЉЙАМС
ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн депутачĕ

Ленинла комсомол Ленинăн—Сталинăн коммунисла партийĕпе çумма-çумăн тăрса, вăл йертсе пынипе çирĕм çул хушши ĕнтĕ коммунисăмшăн кĕрешет. Граждăн вăрçин фрончĕсенче комсомол партипе йунашар пулнă; партипе йунашар тăрса вăл сталинла пилĕкçуллăхсенче хуçалăх тата куљтурă фронтĕнче аслă ĕçсем тунă.


Комсомолĕц-метростройĕвĕцсем, вăрман касакансен комсомолла бригадисем, Амур çинчи Комсомољск хулине тăвакансем, хапрăксемпе савăтсенчи комсомолĕцсен стаханăвла бригадисем,—комсомолĕцсем пур çĕрте те — хуçалăх ĕçĕнчи çĕнтерӳсене пуçаракансем пулса тăраççĕ.

Стаханăвла йухăм халљхи вăхăтра хуçалăхпа куљтурă ĕçĕн мĕнпур облăçĕсенче сарăлса кайрĕ. Уйрăм комсомолĕцсемпе комсомолла бригадăсем рекордсене çӳлерех те çӳлерех çĕклесе пыраççĕ. Халљхи вăхăтри задачă вăл—рекордлă участкăсенчен, звеносенчен, бригадăсенчен рекордлă стаханăвла цехсем, хапрăксем, колхозсем, совхозсем туса хурасси пулат.

Ленинла комсомол çак ĕçре те пуçарса пыраканĕ пулассине тата парти йертсе пынипе хуçалăхпа куљтурă фронтĕнче çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвассине епĕ шансах тăратăп.

Комсомол виççĕмĕш вунăçуллăха кĕнĕ çĕрте çак вăл тăван çĕршывăннемĕр ваљљи унăн чи лайăх парнийĕ пулĕ, вăл парне тăван çĕршыв оборонине тĕреклетет тата пĕтĕм тĕнчипе коммунисăм çĕнтерессине çывхартат.

Çамрăксен хастарлă сойузĕн мухтавлă йубилей кунĕнче хамăрăн çамрăксене саламлатăп.



ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

М. М. Каганович йулташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕпе наградăласси çинчен

М. М. Каганович йулташ 50 çул тултарнă май тата вăл рабочи класпа хресченсем умĕнче тава тивĕçлĕ революцилĕ пысăк ĕçсем тунине шута илсе, Михаил Моисейĕвич Каганович йулташа, халиччен Ленин орденĕпе наградăланăскерне, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕпе наградăлас.

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн Предçедателĕ Заместителĕ—**Г. Петровский.**
ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн Çекретарĕ—**А. Горкин.**

Мускав, Кремљ.
1938 çулти октаберĕн 27-мĕш.

Михаил Моисейĕвич Каганович йулташа

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ тата ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Есĕр 50 çул тултарнă кун Сире—Ленин гвардинчи вăтă болшевика, социалисăмлă индустрин организатăрĕсенчен пĕрине—болшевикла хĕрӳлĕ салам йараççĕ.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕпе ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сире хамăрăн социалисăмлă çĕршывăн оборонă тĕрекне çирĕплетес тĕлĕшпе, социалисăмлă обшчĕствă тăвас тĕлĕшпе нумай çулсем хушши пысăк усă кӳрсе ĕçлеме сунаççĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕпе ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хушнипе:

И. СТАЛИН.
В. МОЛĂТĂВ.

Вĕсен паттăр ĕçĕ çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантарат

Совет Сойузĕн пур кĕтесĕсенчен те „Родина“ самољотăн геройла екипажĕ йачĕпе нумай саламсем килеççĕ, вăл телеграммăсенче пирĕн çĕршыври ĕççыннисем хăйсен хăйулă љотчицисен—Валентинă Гризодубăвă, Полинă Осипенко, Маринă Расковă йулташсен паттăр ĕçĕпе чунтан хавхаланса савăнни çинчен каласа параççĕ.

Киргиз СС Республикĕнчи Чуйск суйлав округĕнчи ĕççыннисем, Гризодубăвă йулташа ССРС Верховнăй Советне депутата суйланă суйлавçăсем, çапла çыраççĕ: „Есĕр, пирĕн мухтавлă депутат, суйлавçăсем шаннине тӳрре кăлартăр. Парти, правителствă тата Сталин йулташ панă хисеплĕ заданийе чаплăн пурнăçа кĕртнĕ май Сире тата Сирĕн чаплă тусăрсене Полинă Осипенкопа Маринă Расковăна сывлăх сунса саламлатпăр“.

Пољарниксем љотчицăсем патне хăйсен хĕрӳлĕ саламне йараççĕ: „Епĕр, Рудољф утравĕ çинчи пољарниксем, сирĕн çĕнтерӳпе мухтанатпăр. Мирлĕ самана ĕçĕшĕн çирĕп тăрса, епĕр, социалисăмлă тăван çĕршывăн патриочĕсем, çакна пит лайăх пĕлетпĕр: çĕршыв хушсан епĕр çитме пултарайман кĕтес çĕр çинче ниçта та çук. Çакна фашиссем лайăх пĕлсе тăччăр!“

„Советсен çĕршывĕн ирĕклĕ хĕрарăмĕсем, — тет хăйĕн саламĕнче ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ орденоносĕц Марийа Демченко,—сталинла саманара хавхаланса çĕкленнĕ хĕрарăмсем социалисăм строителствин пур участкисенче те ĕçĕн геройла образецĕсем кăтартса параççĕ.

Колхоз хирĕсенчи пиншер стаханăвкăсем, хăйулă та паттăр љотчицăсен примерĕпе хавхаланса çĕкленнĕ стаханăвкăсем социалисăмлă уйхирти пысăк тухăçлă тырпулшăн тата ытларах хастарланса ĕçлĕç“.

Республикăри профсойузсен активĕн канашлăвĕ

Октаберĕн 27-мĕшĕнче, Шупашкарта, Строителсен клубĕнче профсойузсен активĕн республикăри канашлăвĕ уçăлчĕ. Канашлăва 500 çын пухăннă. Канашлу пĕр ыйту: Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен сӳтсе-йават.

Канашлу президиума 30 çынтан суйларĕ. Хисеплĕ президиума **Сталин, Молăтăв, Л. Каганович, Ворошилăв, Калинин, Микойан, Андрейĕв, Жданăв, Йежов, Хрушчов, Шверник, Хозе Диас, Тельман** йулташсене суйларĕ. Болшевиксен партин, социалисăмлă тăван çĕршыври халăхсен тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçĕн Сталин йулташăн йатне, партипе правителсвăн çулпуçĕсен йачĕсене асăнсан канашлăва пухăннисем пурте тăвăллăн ала çупаççĕ, ура çине тăрса саламлаççĕ.

Канашлун йертсе пыракан оргăнĕсене суйланă хыççăн, Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕн ĕçĕсем çинчен ССР Сойузĕнчи профсойузсен Тĕп Совечĕн представителĕ Чуриновский йулташ доклад туса пачĕ.

Октаберĕн 28-мĕшĕнче канашлу малала ĕçлерĕ.

Нормăна ытлашшипех тултарчĕç

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтĕнчи комсомолĕцсем ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă уйава ĕç нормине ытлашшипех тултарнипе кĕтсе илчĕç. Пелагейа Скачковă 214 процент, Николай Павлăв 168,7 процент, Лидийа Никитинă 143,1 процент, Иван Никанорăв 140,5 процент, Григорий Йегорăв 134,3 процент, Иван Афанаçйĕв 129 процент, Александр Уварăв 128,4 процент, Нинă Уварăвă 127,5 процент, Иван Михайлăв 121,1 процент тултарнă.

Ољгă Сорокинăпа Лидийа Никитинă ПВХО значокĕн нормисене панă.

„Родина“ самољотăн геройла екипажне Кремљре йышăнни

Октаберĕн 27-мĕшĕнче, кăнтăрла 4 сехетре, Кремљри Пысăк дворецра ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ тата ССР Сойузĕн Правителстви „Родина“ самољотăн геройла екипажне—В. С. Гризодубăвă, П. Д. Осипенко тата М. М. Расковă йулташсене йышăннă.

Праçникри пек чаплăн илемлетнĕ двореца Совет халăхĕн чи лайăх çыннисем, партипе правителствă руководителĕсем, мухтава тухнă паттăр командирсем, хăйулă љотчиксем, чаплă конструктăрсем, наукăпа техникă дейателĕсем, Мускаври савăтсенчи стаханăвĕцсем пухăннă. Пурте хавас кăмăллă, çав тери чаплă вĕçеве телейлĕн вĕçленĕ 3 хăйулă совет хĕрарăмне сывлăх сунса саламлама тӳрĕ килнипе кашнийех телейлĕ.

Унтах телейлĕ виçĕ героинљă; вĕсем çул çинчи коçтумсемпех-ха, анчах вĕсем канса çăмăлланнă ĕнтĕ, хаваслă сăн-питлĕ; вĕсен тавра—тăванĕсем, вĕсем хăйсен ачисене ыталаççĕ. Валентинă Гризодубăвăн ывăлĕ пĕчĕк Соколик тата сакăр çулхи Тањă Расковă Сталин, Молăтăв тата Ворошилăв йулташсем хушшине пысăк тивĕçлĕхпе кĕрсе лараççĕ.

Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв Тĕп Комитетпа ССР Сойузĕн правителстви йачĕпе Совет Сойузĕн çĕнĕ героинисемшĕн, совет халăхĕн йуратнă çыннисемшĕн—Валентинă Гризодубăвăшăн, Полинă Осипенкăшăн тата Маринă Расковăшăн пĕрремĕш тост калат.

Валентинă Гризодубăвă хăйĕн ответлесе каланă сăмахĕнче совет авиацин çĕнĕ çĕнтерӳне тума хавхалантарса çĕкленĕ çын çинчен, нумай мĕлйунлă халăхăн пĕтĕм çĕнтерĕвĕсен организатăрĕ çинчен, тĕлĕнмеле чаплă наставник çинчен, çирĕп руководител те савăк тус çинчен—Иосиф Виссарионăвич Сталин çинчен хĕрӳлĕн калат.

Çĕршывăн хăйулă хĕрĕ каланă сăмахсемпе пĕрлешсе, пĕтĕм зал Сталин йулташа чысласа нумайччен чарăнаймасăр тăвăллăн оваци тăват.

Иккĕмĕш пилот Полинă Осипенко совет халăхĕ пĕр шухăшлă пулни çинчен, вăл туслăн пĕрлешсе тăни çинчен вăйлăн хавхаланса калат.

Маринă Расковă Сталин йулташ йачĕпе чĕререн каланă савăк сăмахсем тĕлĕнмеле ăшшăн йанраса кайаççĕ.

Виçĕ паттăр йулташĕсене—хĕрарăмсен çĕнтерĕвне уйавлакан чаплă љотчиксем, Совет Сойуз Геройĕсем пĕрин хыççăн тепри хăйсен шухăшĕсем, кăмăлĕсем çинчен тухса калаççĕ.

Питĕ пысăк тимлĕхпе итленĕ Сталин йулташ тухса каланине. Вăл каланă чухне темиçе хутчен тăвăллăн ала çупнă. Сталин йулташ хăйĕн кĕскен каланă сăмахĕнче совет хĕрарăмĕсем производствă, куљтурă, наукă ĕçĕн пур отрăçлисенче те тата авиаци пек йăвăр, хĕрарăмсемшĕн вăй çитермеле мар пек туйăнакан отрăçлĕре те чаплă çитĕнӳсем туни çинчен калат. Совет хĕрарăмĕ социалисăм обшчĕствин ырлăхлă обстановкинче çак пур ĕçре те халĕ ĕнтĕ арçынпа йунашар тăчĕ тата нумай чухне унтан иртсе кайат.

Малала Сталин йулташ пирĕн пуринчен те чи пахине — çынсен пурнăçĕсене, уйрăмăнах пирĕн нимĕнрен хăрами, хăш чухне тата тытса чармала мар нимĕнрен хăрами герой-љотчиксен пурнăçĕсене асăрханарах пăхса усрама кирлĕ çинчен сыхлантарат. Вĕсен пурнăçĕ пирĕншĕн пур йышши рекордсенчен те, — вăл рекордсем тем пек пысăк, чаплă пулсан та, — пахарах. Çавăнпа та партипе правителствă пирĕн геройсен пурнăçне, вĕсен кил-йышĕн лăпкăлăхĕпе телейне сыхласа, љотчиксем рекордлă хăрушă вĕçевсем тума ирĕк пама ытти тĕлĕшĕнчен питĕ хытăлăхлă пулаççĕ, çакăн пек вĕçевсем тума питĕ кирлĕ пулса тухнă чухне, сайра-хутра çеç ирĕк параççĕ.

Тайгара „Родина“ самољот екипажне шыраса тупнă тата çийĕнчех пулăшу панă Сахăрăв, Бурлаков, Романăв, Деркунский, Тихăнăв т. ыт. йулташсене сывлăх сунса, Сталин йулташ пирĕн чаплă совет авиацин тĕрекĕпе шанăçĕ пулса тăракан рйадовой совет љотчикĕсен йачĕпе тост калат.

Сталин йулташ малта пыракан тата хăйулă совет çыннисем çине пит пысăк тимлĕх хурса каланă сăмахсене тăвăллăн оваци туса йышăнаççĕ.

Йышăну Совет Сойузĕнчи Хĕрлĕ Çар йуррисемпе ташшисен херлĕ йалавлă ансамблĕ концерт панипе вĕçленет. Концерта ССРС халăх артисĕ Александрăв професăр йертсе пынă.

(ТАСС).

„Родина“ самољот екипажне Мускавра кĕтсе илни çинчен 4-мĕш страницăра.




В. А. Обручев академике Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ парса наградăланă

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕ Владимир Афанаçйĕвич Обручев академик наукăра ĕçлеме пуçлани 50 çул тултарнă йатпа, ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ парса наградăламала тунă. Томск хулинчи институтăн горнăй факултетне В. А. Обручев йатне пама йышăннă.

Й. Ф. Лискун академике Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ парса наградăланă

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕ наукăпа техникăн тава тивĕçлĕ дейателĕ Йефим Федотăвич Лискун академик çурални 65 çул тултарнă тата вăл наукăпа педагогикă ĕçĕнче ĕçлеме пуçлани 40 çул тултарнă йатпа ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ парса наградăламала тунă.



Вĕсене Ленинла-Сталинла комсомол пăхса ўстернĕ

Мухтав Сталин йулташа!

Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултаракан уйав манăн пурнăçри савăнăçлă кун пулса тăрать. Мана ленинла-сталинла комсомол вĕрентсе тăван атте-анне иек пăхса çитĕнтерчĕ. Пĕтĕм чун-чĕререн хавхаланса, çĕкленсе калама пултаратăп: рабочи çемйинче çуралнă епĕ, мансăр пуçне çемйере 6 хĕр. Вĕсенчен иккĕшĕ пуçламăш шкулсенче учитĕлсем пулса ĕçлеççĕ, ыттисем вăтам шкулсенче вĕренеççĕ. Тепĕр 7 çултан пирĕн çемйере вăтам пĕлў илменнисем пулмаççĕ. Аттепе анне çеç, вĕсем те кулленхи политикăна вĕренес тĕлĕшпе пирĕнтен йулмаççĕ.

Епĕ комсомолка, нумай пулмасть Ленин—Сталин парти членĕн кандидатне кĕтĕм. Улатăрти пăравуçсем йусакан савăтра, токарнăй цехра аслă мастăр пулса ĕçлетĕп. Ответлă та хисеплĕ ĕç. Ку цехра сатăрçсем чылай вăхăт хушши сийенлĕ ĕçсем туса пурăннă. Вĕсем çамрăксенчен ўсекен çĕнĕ кадрсене нимĕн вырăнне хумасăр путарса пыма тăрăшнă. Пысăк тухăçлăхпа тăрăшса ĕçлекенсем çинчен елек сарса вĕсене варалама тăрăшнă. Çав вăхăтрах прогулщиксене, дисциплинăна пăсакансене хўтĕленĕ. Çапла вара савăт плана тултарас тĕлĕшпе уйăхран-уйăха прорыва кĕрсе пынă.

Тăшмансене кăкласа ывăтнă хыççăн вĕсен йулашкисене пĕтерес ĕçе пикентĕмĕр. Ку ĕçре комсомол пысăк вырăн йышăнчĕ. Комсомол Ленин—Сталин партин чăн-чăн помощникĕ пулнине кулленхи ĕçре кăтартрĕ. Тăшмансемпе пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешсе пынă май савăт коллективĕ хăйĕн ретне çирĕплетрĕ. Рабочисен çирĕп коллективĕ умра тăракан задачăсене пысăк хавхартлăхпа пурнăçа кĕртме пултаракан пысăк вăй пулса тăчĕ. Стахановла йухăм анăслăн сарăлма тытăнчĕ. Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа çамрăксем пуçарнă ăмăртăва пур рабочисем те хутшăнчĕç. Манăн цех инструментаљнай цехпа ăмăртать. Çентабĕр уйăх планне 150 процент тултарчĕ. Ĕç тухăçлăхĕ ўссех пырать. Кровелщик Конав йулташ кулленхи нормăна 300 процент тултарать. Комсомолĕç-стахановецсем Йуматăв, Морозăв, Уликова, Ларионтĕв тата ыт. йулташсем нормăна 250—300 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Çамрăк рабочисем хăйсен квалификацине ўстерес тĕлĕшпе пур ĕçре те лайăх пример параççĕ. Ман цехра 5 комсомолĕç смена мастăрĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен иккĕшĕ çамрăк хĕрсем. Пĕлўлĕхе ўстерес ĕçпе кашни çамрăк хытă интересленет. ПСК(б)Парти историн Кĕске курсне вĕренме хатĕрленес ĕçе пур комсомолĕçсем те пысăк тимлĕхпе туса пыраççĕ.

Хамăн депутат ĕçĕсене туса пынă çĕре вăхăт нумай кайать. Кунсерен темиçе çыру илетĕп. Çырусен хисепĕнче хама суйлана округри çынсен çеç мар, ытти округсенчен те нумай çыраççĕ. Пуринчен ытла хĕрарăмсем çыраççĕ. Вĕсене пурне те ответ паратăп. Килте-и, производствăра-и, обшĕствă ĕçĕнче-и—пур çĕрте те ленинла-сталинла комсомол пулăшнипе, аслă Сталин йулташ пирĕншĕн тăрăшнине туйатăп.

Тавтапуç сана, комсомол! Есĕ мана çитĕнтертĕн, есĕ çын турăн.

Мухтав, пире çитĕнтернĕ аслă Сталин аттене!

Тамара МОИÇЕЙĔВĂ,
ССРС Верховнăй
Совечĕн депутачĕ.

Шупашкарти рабочисем Совет Сойузĕн Геройĕ Винокурăв йулташ патне йанă çыру

Хасан кўлли районĕнчи кĕрешўре геройĕсенчен пĕри—Винокурăв йулташ Шупашкар çынни. Шупашкарти предприйатисенчи рабочисем митингсене пухăнса „Правда" хаçатра пичетленсе тухнă „Лейтенант Винокурăв" йатлă статйана вуласа тухрĕç.

Винокурăв йулташ Хĕрлĕ Çара кайиччен Шупашкарти авторемонт савăтĕнче ĕçленĕ. Авторемонт савăтĕнчи рабочисем тата инженерлă-техникăлă работниксем Винокурăв йулташ патне çыру йанă. Вĕсем хăйсен çырăвĕнче çапла çыраççĕ:

„Хаклă йулташ Винокурăв! Хасан кўлли районĕнчи пулнă кĕрешўре Есĕр паттăр пулни çинчен епĕр „Правда" хаçатра вуласа пĕлтĕмĕр. Есĕр çаван пек хăйулă тата паттăр пулнишĕн епĕр çав тери савăнса хĕпĕртетпĕр. Савăт коллективĕ Сире, çĕршывăн хăйулă ывăлне тата Сирĕн йулташусене хĕрўлĕ салам йарать.

Пирĕн савăт октабĕр уйĕхни социалисăмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Халĕ епĕр плана 114 процент тултарнă.

Винокурăв йулташ! Пирĕн Чăваш республикинче тата унăн столицинче—Шупашкар хулин сăн-çапачĕ йăлтах улшăнчĕ. Хаљ тата Шупашкарта пысăк строительствăсем пуçланчĕç. Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçула туса пĕтереççĕ. Куљтурă тата йалхуçалăх йенĕпе те нумай мала карăмăр.

Чăваш республикинчи парти организацийĕ ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ тата Сталин йулташ йертсе пынипе халăх тăшманĕсене тымарĕпех кăкласа тăкас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕ. Анчах ку тĕлĕшпе тумали ĕçсем тата та нумай-ха. Епĕр, бољшевикла сыхлăха ўстерес тĕлĕшпе пĕтĕм вăйа хума сăмах паратпăр".

Комсомолĕç—ассистент

Ленинла-сталинла комсомол наукă, литература, искусствă фронтĕнче нумай талантлă çынсем ўстерсе çитĕнтерчĕ. Федăр Дмитрийевич Глухăв çавсенчен пĕри пулса тăрать. Хаљ вăл Шупашкарти йалхуçалăх институтĕнче йалхуçалăх механизаци кафедрин преподавателĕ-ассистенчĕ пулса ĕçлет.

Манăн пурнăçра чи савăнăçлă кун вăл—мана комсомола илнĕ кун пулчĕ,—тет Глухăв йулташ. Унтанпа епĕ хамăн пĕтĕм ĕçе, вĕренĕве комсомол организацийĕ пулăшнипе туса пытăм.

Федăр Дмитрийевич—чăваш ачи. 1934 çулта вăл Хусанти йалхуçалăх институтĕнчен „отлично" паллăпа вĕренсе тухнă. Аспирантурăна вăл выдвиженипе кĕнĕ. Унтан та „отлично" вĕренсе тухнă.

Глухăв йулташ Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулнă. Унта вăл пĕр çултăлăк хушшинче 8 благодарнăç илнĕ. Ăна кĕçĕн лейтенант тунă.

Шупашкарти йалхуçалăх институтĕнче иккĕмĕш çул ĕçлет. Ăна пур студентсем те питĕ йуратаççĕ, пысăк авторитетлă. Çав вăхăтрах вăл тата Мускаври институтра заочнă вĕренет.

Хăй вĕреннĕ, ĕçленĕ вырăнсенче вăл йалан комсомол комитечĕн членĕ йе çекретарĕ пулса ĕçленĕ.

И. Бољшаков.

Халăх ĕçĕнче

Иртнĕ çул комсомол Канаш райкомĕ Вырăскас Пикших йалсоветĕн çекретарне—Федăр Дмитрийĕв комсомолĕçа, канма, сывлăхне çирĕплетме, курорта йачĕ.

Тўрĕ кăмăлпа ĕçлекене—тивĕçлĕ кану. Дмитрийĕв йулташ 1926 çултанпа комсомолта тăрса, йал пурнăçне çĕнетессишĕн, ĕççыннисене пуйан та куљтурлă пурăнакан тăвассишĕн чĕререн тăрăшса ĕçленĕ.

Елĕкхи вăхăтра Пикших йалне, йал халăхĕн пурнăçне вăрман промышлĕнникĕсем, кулаксем—А. Йефремăв, В. Сверчков, Орефйĕв, Сергейев, Тракки Елексей йышши куштансем пусарса тăнă. Çав хура тымарлă кулаксене совет çĕрĕ çинчен тĕпĕпех тăпăлтарса пăрахмала пулнă. Дмитрийĕв комсомолĕç çак историлĕ ĕçре хăйĕн вăйне сахал мар хурать. Вăл 1928 çултан пуçласа пĕр улшăнми йалсовет членĕ пулса ĕçлет. Вунă çул хушши—совет государствин вырăнти дейателĕ.

Комсомолĕçсем хĕрўлĕн ĕçленипе йалта колхоз организациленет, ĕççыннисем Пикших çĕрĕсем çинчен кулаксене 32 хуçалăха йахăн тăпăлтарса пăрахаççĕ. Анчах сăхă кулакăн тымарĕсем пытанса йулма пăхаççĕ. Тракки Елексей кулакăн кĕрўшĕ—шурă офицер Тихăнăв Павăл малтанхи çулсенчех колхоз председателне хĕсĕнсе кĕрет. Вăл колхоза салатса йарас патнех илсе çитерет, халăх пурлăхне çаратать. Колхозниксем Тихăнăва сирсе пăрахаççĕ, анчах районри тата республикăри органсенче ларнă халăх тăшманĕсем хўтленипе, Тихăнăв йулашки вăхăтченех районри ответлă вырăнсенче сăтăрла ĕçсем туса пурăннă. Йулашки вăхăтченех çав шурă офицер, хăйĕн колхозри хўрешкисем урлă, колхоза салатса йама пăхнă, йалти активлă çынсене терророрлама хĕтертнĕ.

1934 çулта çаван пек, йалсовет çекретарĕ Ф. Дмитрийĕв, çуркуннехи тĕттĕм каçхине, йалсоветран киле таврăнать. Кил хапхи умне çитсен, тăçтан кĕтесрен пĕр етем сиксе тухать те, Дмитрийĕва çĕçĕпе чикет.

Дмитрийĕва вилĕмрен тухтăр çеç хăтарать. Анчах ку ĕç пулни çулталăк та çитмест, Дмитрийĕвăн килне тăшмансем вут тĕртсе çунтараççĕ.

Çук, паттăр комсомолĕçăн кăварлă чĕрине нимĕн те хавшатаймасть. Дмитрийĕв халăх ĕçне тата хĕрўлĕрех хăватпа кĕрсе кайать, унăн пултарулăхĕ, таланчĕ тата ытларах ўсет.

Йалта 223 хуçалăхлă колхоз çирĕпленсе çитрĕ, колхозниксем пуйан та хаваслă пурнăçпа пурăна пуçларĕç. Шупашкар—Канаш аслă тракчĕ çинче ларакан Пикших йалĕ районра малта пыракан куљтурлă йалсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Иртнĕ çул, августпа çентабĕр уйăхĕсенче, Гурзуфра, Хура тинĕсĕн чăнкă çыранĕсем тăрăх утса çўренĕ чух, Дмитрийĕв йулташ пирĕн тăван çĕршыв мĕн пек аслине, вăл мĕнле илемлине, пуйаннине, вăл хăйĕн ывăл-хĕрĕсене мĕн пек ăшшăн пăхса ўстернине, Сталинла Конституци ĕççыннисемшĕн мĕнле ырă саккун пулса тăнине тата çывхараххăн, тарăнраххăн туйса илчĕ. Кипарис аллейĕсенче, вырăссен аслă поечĕ Пушкин çўренĕ тўлек çулсемпе çўресе, Федăр Дмитрийĕвичăн чĕри чи таса та ăшă кăмăлпа тулчĕ. Пушкин пурăннă çурта кĕрсе, вăл аслă поетăн аллинче пулнă йапаласене тимлĕ куçпа пăхрĕ. Ексурсантсем нумайĕшĕсем поет пурăннă çуртăн икĕ айăккинче ларакан авалхи çўлĕ кипариссен турачĕсене каса-каса илсе, вĕсене, чи хаклă йапала пек, килĕсене илсе кайаççĕ.

Федăр Дмитрийĕвич апла тумарĕ, анчах вăл Гурзуфран тата вĕрирех вăй-хăват, туллирех пултарулăх илсе таврăнчĕ. 1938 çулти март уйăхĕнчен пуçласа Дмитрийĕв комсомолĕç йалсовет председателĕ пулса ĕçлет.

Халăхшăн вăл шанчăклă çын. Ĕççыннисен пурнăçне малала лайăхлатса пырассишĕн вăл чăн-чăн бољшевикла кĕрешет.

А. Александрăв.

Çĕнĕ йурăсемпе

Епĕ комсомолта ўссе çитĕнтĕм. Комсомол 20 çул тултарни маншăн питĕ пысăк савăнăçлă уйав пулса тăрать. Ку аслă уйава епĕ „Комсомол йурри", „Йешĕрсе ўсет хаваслăх" тата „Хĕвелĕмĕр Сталин" йатлă çĕнĕ йурăсем сырнипе кĕтсе илтĕм.

Комсомолĕç-композитăр
Г. С. Лебĕдĕв.

Отличнă вĕренсе тухма тăрăшать

Комсомолĕç-студент А. В. Миронăв пединститутра йулашки курсра вĕренет. Вĕренўре вăл малти ретре пырать. Иртнĕ вĕренў çулĕ вĕçленнĕ чух пулнă тĕрĕслевре пĕр предметпа çеç «посредственно» илчĕ, ыттисемпе пуринпе те «отлично».

Лайăх вĕреннипе пĕрлех обшĕствăлă ĕçе те активлă хутшăнать. Хаљ вăл комсомол комитечĕн членĕ.

Миронăв йулташ кăçал та лайăх вĕренсе пырать. Институтран «отлично» паллăпа вĕренсе тухса вăл ленинла-сталинла комсомол членĕн чыслă йатне тўрре кăларма тăрăшать.

Петроградри рабочи çамрăкĕсем Корнилăва хирĕç кĕрешме кайаççĕ. (1917 ç.). (Центрти фото-кино-архив).

ПСÇЛКС 20 çул тултарнă йатпа

ТУРХАН. Аслă Арапуç вăтам шкулĕнчи комсомолĕçсем уйава пысăк хаваслăхпа кĕтсе илеççĕ.

Йулашки кунсенче 16 çамрăк комсомола кĕнĕ.

Шкулта литературă кружокĕ пур. Унта 22 çын тăрать. Кружокра тăракан Николай Митта, Николай Горшков т. ыт. те сăвăсем, калавсем çырчĕç.

М. Сорокин.

ЙЕТĔРНЕ. Палтайри вăтам шкулта вĕренекенсем Ростоври пионерсен опычĕ тăрăх социалисăмлă ăмăртăва хутшăнса комсомол уйавĕ тĕлне нумай парнесем хатĕрлерĕç. Ку тĕлĕшпе 8-мĕш „А" класри вĕренекенсем малта пычĕç.

Комсомол уйавне хор кружокĕ „Песня о родине", „Москва" тата ытти йурăсем те вĕренчĕ.

Литкружок членĕсем „Çамрăк хунав" йатлă журнал кăларчĕç. Унта Сталинла Конституци çинчен çырнă сăвăсемпе калавсем нумай.

П. Захарăв.

Совет Сойузĕн Геройĕ Вйачеслав Винокурăв

Шупашкарта черетлĕ призыв пынă. Çар комиссариатне сарă та хитре, кăвак куçлă çамрăк пырса кĕнĕ.

—Хĕрлĕ Çара кайас тетĕп, авиацинче служит тăвас кăмăл пур, мотор ĕçне лайăх пĕлетĕп,—кĕскен те ăнланмала каласа панă вăл призыв комиççи председателне.

Председатĕл документсене тĕрĕслет, врачсем унăн сывлăхне тĕплĕн пăхаççĕ. Пурте йĕркелех пулнă.

—Авиацине илме пултараймастпăр, вырăн çук. Танк чаçне кайма пултаратăн, хирĕçлеместĕн пулсан, унта илĕпĕр,—тенĕ председатĕл.

Винокурăв йулташ танкис пулма сĕннине пысăк хаваспа йышăннă.

Çар чаçне çитсенех ăна моторис тăваççĕ.

—Акă сирĕн машинă, йуратса пăхăр. Астăвăр, çар техники типтерлĕ тата лайăх тыткаланине йуратать,—тенĕ командир, машинăна çамрăк бойец-моторис аллине парса.

Моторис Винокурăв хăйĕн танкне тăрăшса, йуратса пăхать. Материаллă чаçсене хăвăрт хăнăхса çитет, унтан та пахарах, вăл танка тытса пыма час вĕренсе çитет. Часăт пысăк тактикăлă вĕренĕве тухас умĕн командир Винокурăва хăй патне чĕнсе, ăна тактикăлă вĕренўре командир танкĕн водителĕ туни çинчен пĕлтерет. Винокурăв машинăна вĕренĕве илсе тухма тĕплĕн хатĕрлет. Моторăн пĕтĕм пайĕсене тĕплĕн пăхса тухать, вĕсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслет. Вĕренўре мотор пĕр чарăнмасăр ĕçленĕ. Машинăна отличнă тытса пынăшăн тата чаçсене пĕр чарăнмасăр ĕçлемеле тунăшăн Винокурăв йулташ наградă илет.

Унтан ăна отличник тесе танк ĕçне вĕренмели шкула йараççĕ. Вăл шкула тин çеç уçнă пулнă. Çавăнпа та Винокурăв йулташăн вĕренме тытăниччен вĕренўре кирлĕ йапаласене хатĕрлес йенĕпе нумай ĕçлемеле пулнă. Ăна кивелнĕ танк панă. Кочергин курсантпа пĕрле вĕсем çав кивелсе пĕтнĕ машинă çинче вĕренеççĕ. Танк моторне кивелсе пĕтнĕ чаçсенчен пухнă пулсан та, аван ĕçленĕ. Ун çинче советăн çамрăк танкисĕсем нумай вăхăт хушши вĕреннĕ.

Шкулта Винокурăв йулташ комсомола кĕрет. Обшĕствăлă ĕççене активлă хўтшăнса ĕçлет, шкултан отличнă паллăсемпе вĕренсе тухать.

Винокурăв йулташ çар чаçне çав тери лайăх отзывсемпе пырса кĕрет. Чаç командованийĕ Винокурăв йулташа вĕренў взвочĕн командирĕ тунă. Çамрăк командир-танкис пикенсе ĕçлеме тытăнать. Хăйĕн пĕлĕвне курсантсене парать, вĕсемпе кашнинпе уйрăммăн ĕçлет. Унăн взвочĕ материаљнай чаçсене лайăх тытас тата техникăна вĕренес йенĕпе чаçре мала тухать.

Винокурăв йулташ вĕрентсе çитĕнтернĕ çынсем тăван çĕршыва чĕререн йуратнине, мирлĕ çĕршыв çине тапанса килме хăтланакансене çĕмĕрсе тăкма хатĕр тăнине тата ăна тума пĕлнине ĕçре кăтартмали вăхăт сиксе тухнă.

Винокурăв йулташ тăракан чаç Хасан кўлли патĕнчи çапăçура пулать. Винокурăв йулташ взвочĕ темиçе хутчен самурайсем çине атакăна кайса, кашнинчех паттăр заданине чаплăн пурнăçа кĕртет, тăшмана йăлтах çĕмĕрсе тăкать. Кузнецов комсомолĕç-танкисăн йачĕ нумай çынсемшĕн паллă. Вăл хăйĕн чĕлелĕхĕпе тăшмана улталаса ăна вăйлăн çĕмĕрсе тăкнă. Çавăн пекех, танкиссем Чернаховский, Моиçейенко йулташсем—Винокурăв йулташ вĕрентсе ўстернĕскерсем, çирĕплĕхпе хăйулăхăн тата паттăрлăхăн паха тĕслĕхĕсене кăтартнă.

Чăн-чăн паттăрлăха, Сталин пăхса ўстернĕ çынсен çирĕплĕхне командир Винокурăв йулташ хăй те лайăх кăтартса панă. Унăн умне пысăк та ответлă задачă лартнă: противник тăракан вырăна кĕрсе кайса, унăн тупăсенчен персе тăракан вырăнне çĕмĕрсе тăкмала пулнă. Винокурăв йулташ çак заданине пысăк чыс вырăнне хурса хăй çине илет.

Танк противник оборонин малти кĕтессине хăвăрт çитет, пралукпа карнă вырăнсене татса пĕтерет те, танк окопсем тăрăх персе çĕмĕрсе тухать. Самурайсем хăраса ўксе тарма тытăнаççĕ. Танк хăйĕн çирĕп кăкăрĕпе окоп çинеле пырать, пулеметран кашнинчех тĕл персе самурайсене пĕтерсе пырать.

Унтан, оборонăн малти кĕтессине пĕтерсе хунă хыççăн, танк противникăн пытанса пемели вырăнĕсене йăлтах пĕтерсе хума шала кĕрсе кайать. Инçетрех мар станоклă пулемет ларнă. Вăл танк çине пеме тытăннă. Пулеметран пенĕ пуљăсем шултра çăмăр чўрече кантăкне çапса çунă пек броња çине пырса çапăннă. Винокурăв йулташ темиçе хутчен пулемет çине тĕллесе перет. Пулемет сасси пĕтсе ларать, ăна йăлтах çĕмĕрсе тăкаççĕ.

Комиссар Йефимăв йулташ çĕнĕрен ăçтала пемели çинчен кăтартать, танк вăл кăтартнă çĕреле кайать. Хăравçă самурайсем пулемечĕсене пăрахса тараççĕ, пирĕн вăл пулемета çĕмĕрсе тăкаççĕ. Çак çапăçура танкиссем йапонĕçсен нумай вăйне пĕтереççĕ: вĕсен пемели вырăнĕсене пĕтерсе тăкаççĕ тата нумай çынсене вĕлереççĕ.

Танк вăрăм тата ним формăсăр окоп патне çитсе тăрать. Винокурăв йулташ пулеметрен пеме тытăнать. Çав вăхăтрах танк хытă сиксе ўксе малала кайма чарăнать. Комиссар водитĕл çине пăхса илет. Водитĕл-комсомолĕç Рассоха вилнĕ. Мотор пăсăлнă. Командир урине амантнă. Анчах хăйулă танкиссем хăраса ўкмеççĕ. Патронсемпе снарйадсем йулашки йулмиччен персе тăрса противнике танк çывăхне йамаççĕ. Тупăсемпе пулеметсенчен пеме чарăннă хыççăн, вĕсем гранатăсемпе тата пистолетсемпе хĕçпăшалланса паттăр оборонăна хатĕрленсе тăраççĕ.

— Комиссар йулташ, епĕ вилĕмрен хăрамастăп. Тăван çĕршывшăн вилесси—вăл чи чаплă чыс,—тенĕ екипаж командирĕ Йефимăв комиссара.

— Винокурăв йулташ, шансах тăратпăр, епĕр çакăнтан çăлăнса тухатпăрах,—тесе ответленĕ Комиссар Йефимăв.—Çăлăнса тухаймасан, тăшман аллине чĕррĕн каймăпăр.

Самурайсем чарăнса ларнă танк патне пыма чылайччен хăйусăрланса тăнă. Унтан вĕсем вăрттăн шуса танк патне çывхараççĕ.

—Танка чĕртсе йарса, гранатăсенчен персе тарма пикенес, тесе шухăшлаççĕ хăйсем. Çук, танка чĕртмерĕç. Танкиссене çавăрса илесшĕн пулнă вĕсем. Çав ĕмĕтпе самурайсем танк йĕри-таврах хуралçăсем тăратса тухаççĕ. Çапла çĕр каçаççĕ танкиссем.

Танк ăшĕнче çĕрле ытла йăваррах пулман. Анчах кăнтăрла пăчăланса çитнĕ, тўсме çук вĕри пулнă. Шыв та пĕтсе çитет. Сывлама йăвăр. Çапах та, Сталин пăхса çитĕнтернĕ çынсем çирĕп, вĕсем тем тери пысăк йăвăрлăхран та хăраса ўкмеççĕ. Танкиссем хăйсене пырса çăласса шаннă, вилес пулсан та, тăван çĕршывшăн паттăрсен вилĕмĕпе вилме хатĕр пулнă.

Асаплă кун иртсе пынă. Каç пулнă тĕле пирĕн артиллери герой-танкиссем ларакан вырăна вăйлăн пеме тытăнать. Снарйадсем танк патĕнчех çурăла-çурăла кайаççĕ, çĕре танк çинеле çĕклесе пăрахать. Танка сыхласа тăракан самурайсем окоп йеннеле шуса тараççĕ.

Танкиссем мĕнле тармали çинчен часах шухăшласа илеççĕ. Пирвайах çўлти љукран комиссар Йефимăв тухса тарать. Самурайсем ун çинеле тĕллесе пеме тытăнаççĕ тата вĕсем комиссара хыçалтан хăвалаççĕ. Çав вăхăтрах Винокурăв йулташ пистолетран питĕ те тĕл персе икĕ самурайа танк патĕнчех персе антарать, ыттисем хăраса ўксе каллех окопа тарса пытанма васкаççĕ.

Винокурăв йулташ пек хăйулă ĕçе тума бољшевикла çирĕплĕхпе хăйулăх кирлĕ, вăл пирĕн бойеçсен пулнă та ĕнтĕ. Винокурăв йулташ аманнă ури çине тăрса танк ăшĕнчен тухма пикенет. Анчах суран çав тери хытă ыратнă. Унтан вăл аллисемпе çакăнса танк ăшĕнчен тухать. Унăн кирек мĕнле пулсан та вăтăр метр чупса курăксем нумай вырăна çитмеле пулнă. Винокурăв й. чупать, хыçалтан ун çине пеме тытăнаççĕ. Часах ун вăйĕ пĕтсе çитнĕ. Пуç çаврăннă, куçĕсем хуралнă. Анчах унăн тăнĕ пĕтсе çитмен-ха—мĕнле пулсан та хăмăшсен тĕмĕ патне чупса çитмеле. Хăмăшсем патне чупса çитсе ўкет. Уçă сывлăш Винокурăв йулташа тăна кĕме пулăшать. Вăл айăк çине выртса малала шăвать, хамăрăннисем патне çитме тăрăшать. Винокурăв йулташран инçетрех мар пăшал сасси илтĕнет. Ăна комиссар пенĕ пулнă, вăл Винокурăв йулташа шыранă, чухне йапонĕç çине пырса тухнă пулнă, ăна вăл пистолетран персе пăрахнă.

Винокурăв йулташ хăйне хăваласса пĕлсех тăнă. Çавăнпа та вăл тăшманран çăлăнса йулма хатĕрленнĕ. Часах вăл темле ăнланмала мар чĕлхепе калаçнине илтет. Сасă çывхарнă çемĕн çывхарса пынă. Винокурăв йулташ сулахай чĕркуççи çине чĕркуçленет те, тăшман çитессе кĕтме тытăнать. Йунашарах, хăмăш хушшинче, кăштăртатни илтĕнсе кайать. Винокурăв йулташ хăйĕн пистолетне çывхарса пыракансем йенне тытать. Акă, хăмăшсем хушшинчен самурайăн йĕрĕнчĕклĕ куçĕсем курăнаççĕ. Пĕр самантрах Винокурăв йулташ ăна персе ўкерет. Иккĕмĕш штыкне сулса йарать. Винокурăв йулташ пистолетпа самурайăн винтовкинчен çапса штыкне ўкерет, çав вăхăтрах хăй аллинчи пистолет та тухса ўкет. Винокурăв йулташ хăйĕн пĕтĕм йулашки вăйне пухса сиксе ўкет те, кукăр уралла пĕчĕк йапонĕца çĕр çумне пăвса пăрахать. Тăшманăн пуçне хĕстерсе лартать. Унтан Винокурăв йулташ тепĕр хут пĕтĕм вăйне пухса сулахай чĕркуççипе йапонĕца тапать. Иапонĕца çав тери вăйлă тивет, вăл вырăнтан та тапранаймасть. Винокурăв йулташ пистолетне илет те хамăрăннисен йенне хăвăрттăн шăвать.

Хăмăшсем хушшинче çĕр каçать вăл. Хăйĕн суранĕсене айалти кĕпине çурса çыхать. Тепĕр кунне ăна пирĕн икĕ бойец-разведчиксем тупаççĕ.

Çав куннех пирĕн çар чаçĕ Винокурăв йулташ танкĕ ларакан вырăна йышăнса илет. Машинă часах ĕçлеме тытăнать.

* * *

Хасан кўлли районĕнче пулса иртнĕ кĕрешўре хăйсен хăйулăхне тата паттăрлăхне кăтартса Совет Сойузĕн Геройĕ йатне илме тивĕçлĕ пулнисенчен пĕри—лейтенант-комсомолĕç Вйачеслав Петрович Винокурăв йулташ пулса тăчĕ.

Ку статйана „Правда" тата „Тревога" хаçатсенче Винокурăв йулташ çинчен тухнă статйасенчен илсе çырнă.

СОВЕТ ҪАМРӐКӖСЕМ! ТӐВАН ҪӖРШЫВӐН ХӖРӲЛӖ ПАТРИОЧӖСЕМ ПУЛӐР!

Арҫ. ОРЛОВ

КОМСОМОЛ

Пайан ес ҫирӗм ҫул тултартӑн.
Хайар кӗрешӳре, ӗҫре
Мӗнпур хуласенче, йалта та,
Мӗнпур хӗвеллӗ кӗтесре
Пайан сана савса чысласҫӗ,
Хакласҫӗ кунҫулна, ӗҫне.
Ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем сунасҫӗ
Малашнехи кӗрешӳре.

***

...1918 ҫул
Нихҫан та асран кайас ҫук:
Выҫлӑх, фронт, чир-чӗр... Мӗн чул
Тӳсмен-ши асап ун чух.

Тин ҫеҫ ҫуралнӑ республикӑ ҫине
Интервенци, шурӑ ҫар тӑвӑнаҭ—
Йунпа сӳнтерме революцине,
Йун ӑшне путармашкӑн ӑна.

Ҫуралтӑн ес ҫак хайар тапхӑрта,
Парти ӗҫне пулӑшма.
Парти чӗнет: „Ӗҫсынни, хӑвӑтрах
Фронта, тӑшманпа ҫапӑҫма!“

Пиншер комсомолӗц пиллерӗ хӑйне
Ҫӗршыв ирӗкне сыхлама.
Ҫӗршывӑм кӑтартрӗ ҫӗнми вӑй-халне,
Аркатрӗ хайар тӑшмана.

Ишӗлнӗ хуҫалӑх вӑйне ҫӗклеме—
Парти хушаҭ ӗҫлеме.
Епӗр пӑхман кӑнтӑрла-ҫӗрлене,
Ырма та, канма та пӗлмен.

Ленин каларӗ пире вӗренме:
Епӗр—сӗтел хушшинче.
Епӗр ниҫта та нихҫан ӳркенмен
Кӗрешӳн аслӑ ҫулӗ ҫинче.

Парти ҫӗклерӗ пилӗкҫуллӑх плана:
Ҫитес те иртес Америкӑран.
Алла епӗр илтӗмӗр техникӑна,
Пыратпӑр-и халӗ кайра?

Виҫҫӗмӗш пилӗкҫуллӑх пыраҭ,
Ӑҫта комсомоли ҫитмен!
Вӑл—хапрӑкра, савӑтра, шахтӑра,
Вӑл—колхозра, вӑрманта, хулара;
Вӑл—пур ҫӗрте те ӗҫчен.

Ҫак ҫулсенче тишкӗретӗп те еп,
Ҫирӗмӗшпе тӑрататӑп умма;
Ленин йатне тивӗҫпе илнӗ, теп,
Икӗ орденлӑ комсомола.

***

Пӗчикрен ес пире ҫитӗнтертӗн,
Комсомол—революцилӗ ҫар.
Ак, пыратпӑр епир ретӗн-ретӗн,—
Ывӑлу-хӗрӳсем мӗлйуншар.

Куллен кун, ывӑнми ес вӗрентрӗн
Ӗҫлеме, кӗрешме, ҫӗнтерме.

Ачусем нихҫан та, пӗре те
Санӑн тивӗҫлӗхне ҫӗтермен.

Ак Кривонос—рекорчӗпе паллӑ,
Коккинакки... сахал-и вӗсем!—
Геройсем—кӗрешеҫҫӗ мухтавлӑн,
Санӑн чыслӑ йатна ҫӗклесе.

Класлӑ сисӗмлӗхе ҫивӗчлетрӗн,
Пур ҫӗрте тӑшмана паллама.
Пурнӑҫа йуратма ес вӗрентрӗн,
Ӑна сутӑ, телейлӗ тума.

Ес вӗрентрӗн тӑван ҫӗршыва та
Аннене йуратни пек савма.
Йуратса ӑна епӗр сыхлатпӑр,
Хураллатпӑр хайар тӑшманран.

Сывлӑшра тар шӑршӑ сисӗнеҭ-и,
Йалкӑшсан фашисла вут-кӑвар,—
Епӗр тухӑпӑр хурҫӑлӑ ретӗн,
Тӑшмана хирӗҫ тӑрӑпӑр кар.

***

Ирсерен гудоксенӗн йурри
Йан кайаҭ-и тӑван ҫӗршывра,
Еп курап: комсомолӑн ҫемйи
Ӗҫ пуҫлаҭ хапрӑкра, савӑтра.

Карапсем тинӗс тӑрӑх пыраҫ,
Хура тӗтӗм тухаҭ пӑлкаса.
Комсомол ав тӑраҭ вахтӑра,
Ҫӗршыва тӑшманран сыхласа.

Тӳпере йанӑраҭ хурҫӑ шав,
Чӗкеҫ йевӗр выҫаҭ самоҭот.
Комсомол штурмлаҭ сывлӑша,
Рекордсмен комсомолӗц-пилот.

Тӳпере парашӳт карӑнаҭ—
Шурӑ пӗлӗт кӑштах хумханаҭ.
Комсомол тӗрӗслет мӗн хӑйне,
Кунран кун ӳстерет вӑл вӑйне.

Ҫӳлрен ҫӳлӗ ӳсеҫ етажсем,
Ҫӗн ҫуртсем кармашаҫ пӗлӗте.
Ку вӗт ман комсомол тантӑшсем
Пурнӑҫлаҫ ӗмӗрхи ӗмӗте.

Мускав айӗ—сут реҭсӑлӑ ҫул,
Пӑравус ҫил пек хӑвӑрт пыраҭ.
Ывӑнми ҫамрӑк ҫар—комсомол
Кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлет метрора.

Сутӑ ҫӑлтӑр ватӑ Кремӗл ҫинче
Пӗр сӳнми хӑватпа йалкӑшаҭ.
Ку—Мускав Хӗрлӗ плошчӗдӗнче
Комсомолӑн парачӗ пыраҭ.

Мавзолей ҫинче Сталин тӑраҭ,
Вӑл мала кӑтартаҭ алӑпа.
Комсомол мӗлйун ҫарӑн пыраҭ
Ленин-Сталин кӑтартнӑ ҫулпа.

Виҫӗ паттӑр

Шурӑмпуҫӗ хӑпарсассӑн,
Кӗрхи сивӗ ирпеле
Вӗҫсе кайрӗҫ виҫӗ тантӑш
Хӗвелтухӑҫ йеннеле.

Мӗн пур халӑхӑн ҫулпуҫӗ
Аслӑ Сталин йачӗпе
Ӑмӑрт-кайӑк пек хӑйуллӑн
Вӗсем вӗҫнӗ ҫӗрӗпе.

Умри ҫулӗ тӗксӗмленнӗ,
Ҫула пӳлнӗ ҫил-тӑман.
Анчах пирӗн виҫӗ паттӑр
Нимӗнрен те хӑраман.

Тӑхӑр кун ҫӗршыв пӗлмерӗ
Виҫӗ ҭотчик хыпарне,
Кунӗн-ҫӗрӗн вӑл шырарӗ
Чаплӑ „Родина“ тӗлне.

Тӑхӑр кун хӑй хӗрӗсемшӗн
Пӑшӑрханчӗ ӗҫсынни.
Мӗн пек савнӑҫ—виҫӗ паттӑр
Ҫӗнтерсе таврӑнни!

Хӗрлӗ ҫӑлтӑрлӑ ҫӗршывӑн
Вӑйӗ-пурлӑхӗ—сынра.
Ҫын тени нимрен те хаклӑ
Пирӗн аслӑ ҫӗршывра.

Пӗтӗм халӑх виҫӗ тусшӑн
Уйаври пек хӗпӗртет.
Сахал мар ҫӗнтерӳ тӑвӗҫ
Вӗсем пирӗн ӗмӗрте.

Виҫӗ харсӑр геройҭӑ
Тӗлӗнтерчӗҫ тӗнчене.
Ҫӗршыври ватти-вӗтти те
Саламлаҫҫӗ вӗсене.

ЙЕХРИМ ИВАНӖ.

Октӑбӗр уйавӗн парнисем

ТРАК. Аслӑ Чуллӑри „Прогресс“ колхоз членӗсем Аслӑ Октӑбӗр революцин 21-мӗш уйавне пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илеҫҫӗ. Уйав йачӗпе пирӗн хаҭ ҫеҫ туса пӗтернӗ ҫӗнӗ клуб уҫӑлаҭ тата 18 лаша вӑйлӑ двигатӗл ӗҫе кайаҭ.

Колхоз государствӑ умӗнчи пур обйазатӗлствӑсене те парса татнӑ.

Ф. Гаврилӑв.

Пултарулӑх

Аркади ӖҪХӖЛ

Епӗр социалисӑмлӑ хулара. Ку вырӑнта 5—6 ҫул кайарах арму-ти ҫеҫ кашласа ларнӑ. Халӗ тем пысӑкӗш савӑт — гигант кӗрлет, социалисӑмлӑ хула малала ҫитӗнсе пыраҭ.

Канаш хулинчи Ленин урамне, пӗр тӗлте пекех, кӑнтӑр йенчен Комсомол урамӗ, ҫурҫӗр йенчен Ирӗклӗх урамӗ тухаҭ. Мускавран Инҫет-Хӗвелтухӑҫнеле тӑсӑлакан аслӑ чукунҫул магистралӗ Ленин урамӗ тӑрӑх ӳкнӗ. Ҫак анлӑ урампа пынӑ чух, анӑҫалла та, тухӑҫалла та вӗҫӗмсӗр иртекен составсене курсассӑн, пурӑнӑҫ пӗр чарӑнмасӑр куҫнине тата таранрах-хӑн туйатӑн. Канаш хули аслӑ совет ҫӗршывӗн пӗр пӗчӗк кӗтесӗ, вӑл пӗтӗм ҫӗршыв пурнӑҫӗпе ҫирӗп ҫыхӑнса тӑраҭ.

Ленин урамӗнчен Ирӗклӗх урамне кӗрсен, пушар вышкинчен инҫех те мар, бетонран хывнӑ ҫӳлӗ тӑваткӑл йупа кӗрнеклӗн тӑнине куратӑн. Кунта — паттӑрсен масарӗ.

Кӗрхи йӑвӑр пӗлӗтсен хушшипе йӑмӑх хӗвел темӗнле именӳлӗн пӑхаҭ. Масар ҫинчи ҫамрӑк ҫӑка, ҫил вӗрнипе, йеӗрипен хумханкалаҭ. Ҫара пӗлӗтсем тапхӑр-тапхӑр капланса килсе, ҫӗр ҫине таса та вӗтӗ ҫӑмӑр ҫапаҫҫӗ.

Кунта ирӗклӗхшӗн, тӑван ҫӗршывшӑн паттӑр кӗрешсе ӳкнӗ йулташсем ҫывӑраҫҫӗ. Вӗсен хушшинче Ваҫҫӑ Аржанухин, Шурӑ Соловйов, Пеҭа Трофимӑв, Григорйӗв комсомолӗцсем. Граждӑн вӑрҫин паттӑрла кунӗсенче коммунисла партипе комсомол вӗсене, паттӑр Хӗрлӗ Ҫар ваҭҭи ҫимӗҫ хатӗрлеме мобилизацилесе, йалсене йанӑ. Хӗрӳлӗн ӗҫленӗ вӗсем йалта—ӗҫсыннисене тӑван Хӗрлӗ Ҫара пулӑшмали ҫинчен, аслӑ совет ҫӗршывӗн ҫутӑ малашлӑхӗ ҫинчен ӑнлантарса панӑ, хуралтӑсем хыҫӗсенчен, нӳхреп тӗпӗсенчен кулаксем пытарса хунӑ тырпулӑсене алта-алта кӑларнӑ. Кулаксем ҫиллисене шӑнараймасӑр хирӗҫ ҫӗкленнӗ. Халӑхӑн ҫав ирсӗр тӑшманӗсем пирӗн малтанхи паттӑр комсомолӗцсене тискеррӗн вӗлернӗ...

Лӑпкӑн ҫывӑрӑр, йулташсем! Сирӗн тӑпру йӑвӑр мар. Есӗр выртакан ҫӗр ҫинче тӗлӗнмеле хавасла, илемлӗ пурнӑҫ ӳссе чечекленчӗ. Ӗлӗкхи пылчӑк айне путнӑ Шӑхран вырӑнӗнче халӗ ҫӗнӗ пысӑк хула тулли пурнӑҫпа кӗрлет. Есӗр тӑрас пулсассӑн, хаҭхи Канаша паллас та ҫук пулӗ.

Авӑ, аслӑ Ленин урамӗпе шкул ачисем ҫӳлӗ, ҫутӑ шкулала утаҫҫӗ. Икӗ арҫын ача, хӑйсем пӗчӗкҫеҫҫӗ, хӗрӳленсех „Родина“ самоҭотӑн паттӑр екипажӗ ҫинчен калаҫса пыраҫҫӗ. Пӗрин аллинче самоҭот моделӗ. Вӑл Раскова йулташ тайгара пӗччен мӗнле пурӑнни ҫинчен каласа параҭ:

— Ҫӗрле... Тайгара ӑҫта кайас? Раскова хӑйӗн сӑран кӗрӗкне пӗркенет те пуҫне ҫӗре чиксе выртаҭ. Унтан илтет: инҫех те мар кушак—мйа-у-у! тесе ҫухӑраҭ.

— Кушак мар вӑл!

— Кушак мар ҫав... Рыҫ теҫҫӗ ӑна...

Акӑ, Канашран хӗвел тухӑҫ йеннеле вакунсем йусакан савӑтӑн хӑватлӑ гудокӗ йанӑраса кайаҭ.

РСФСР Верховнӑй Совет депутачӗ Й. А. АНТОНӐВА йулташ.

Епӗр Илйич урамӗнчи 1-мӗш номӗрлӗ ҫурта кӗретпӗр. РСФСР Верховнӑй Совет депутачӗ комсомолкӑ Антонӑва, ҫӗрлехи сменӑран пайан ирхине 7 сехетре таврӑнсан кӑшт вырта канна та тахтах тӑнӑ. Вӑл учебникпе лараҭ. Туллимар вӑтам шкул пӗтернӗскер, вӑл кӑҫал, савӑтра ӗҫленӗ хушӑрах, вӑтам шкулӑн 8-мӗш класӗнче вӗренет. Кунсӑр пуҫне, нумай пулмаҫ ӑна йӑвӑҫ каскалакан цехра станочницӑран маҫтӑра куҫарнӑ. Маҫтӑран рабочисене ӗҫре кӑтартса пымала, черҭожсем туса памала.

— Ҫывӑрмали ҫук халӗ,—тет Каҭа, асӑрханӑ хушӑра пӳлӗмри чечексене шӑварса. Каҭан пӳлӗмӗнче таса. Кунта сарлака филогендрӑсем, фикуссем, розӑсем ҫитӗнеҫҫӗ. Сӗтел ҫинче електричӗспа вӗрекен чейник лараҭ. Йӗри-тавра фотокартӑчкӑсем.

Вӗренме ҫӑмӑл мар. Горш инженер халӗ физикӑпа, математикӑпа, черченипе питӗ пысӑк заданисем панӑ. Ҫапла кӗнекепе ларнӑ вӑхӑтра час-часах Антонӑвӑ депутат патне, алӑка шаккамасӑр-мӗнсӗр, тӑван киле кӗнӗ пек, суйлавҫӑсем—рабочисем, колхозниксем кӗреҫҫӗ. Депутатран хӑйсен чӗрери ыйтӑвӗсене татса пама ыйтаҫҫӗ. Час-часах почтаҭйон пыраҭ—ҫырусем вӗҫӗмсӗр! Республикӑри ӗҫсыннисем ҫеҫ мар, айакран та ҫыраҫҫӗ Антонӑвӑ йулташ патне. Нумай пулмаҫ вӑл Октӑбӗрски чукунҫулӗ тӑрӑхӗнчи Лепсе йачӗпе тӑракан савӑт работницинчен— Перевертӑвӑ гражданкӑран ҫыру илнӗ. Работницӑ хӑй ачин ашшӗне шыраҭ—Чӑваш республикӗнче пулмала, тет вӑл. Антонӑвӑ йулташ работницӑна вӑхӑтра пулӑшаҭ, вӑл ыйтнипе, следстви органӗсем тарса ҫӳрекен ҫынна часах тупаҫҫӗ.

Ҫапла депутат-комсомолкӑ хӑйӗн суйлавҫисене куллен ӗҫре, пурнӑҫра пулӑшса пыраҭ. Антонӑвӑ йулташ халӑх шанчӑкне ҫухатмаҫ, вӑл государствӑ деятелӗн тивӗҫлӗхне ҫирӗп тытаҭ, хӗрӳлӗн ӗҫлӗт, ҫывӑрма пӗлмесӗр вӗренет.

Вӗренмесӗр ӗҫ тухманнине халӗ тӳрӗ кӑмӑлла рабочисем ӑнланҫа илнӗ. Савӑт—шкул. Кунта вӗренмен ҫын сайра тӗл пулма пулаҭ. Йӑвӑҫ каскалакан цехри рабочи-комсомолӗц Михайлӑв кӑҫал 18 рабочине хут вӗрентнӗ, вӗсенчен 10-шне тахҫанах вӗрентсе кӑларнӑ, ыттисене пайан, комсомол ҫирӗм ҫул тултарнӑ кун, парне шучӗпе, вӗрентсе кӑлараҭ.

Ҫамрӑксем тӑрӑшса вӗренсе рабочирен маҫтӑра, маҫтӑртан техника, унтан инженера, цех начаӆникне куҫса пыраҫҫӗ. Йулашки вӑхӑтра кӑна Богомолӑв, Афтайӗв, Титов, Иуманӑв, Кайсарӑв, Чернухин, Кротӑв, Константинӑв комсомолӗц-стахановӗцсене рабочирен маҫтӑра куҫарнӑ. Савӑтри комсомолӗцсенчен 5 инженер, 24 техник, 2 цех начаӆникӗ, 3 отдел начаӆникӗ, 6 лаборант, 131 слесӑр тата ыт. те.

Савӑтра социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва, стахановла йухӑма комсомолӗцсем пуҫарса пыраҫҫӗ.

Хаҭхи вӑхӑтра комсомолӗцсем тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкийӗсене пӗтерес тӗлӗшпе хӗрӳлӗн ӗҫлеҫҫӗ. Савӑтра пытанса пурӑннӑ халӑх тӑшманӗсем—троцкисла-бухаринла шпионсем савӑта нумай сӑтӑрласа хӑварнӑ. Уйрӑмах йӑвӑр тӳснӗ савӑтӑн чӗри—ТЭЦ. Комсомолӗцсем халӗ ТЭЦ-ра мӗнпур механисӑмсене тӗплӗн пӑхса тухса тӗрӗслеҫҫӗ. Тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, турбинӑсем ӑшӗнчен тимӗр таткисем, ванчӑк гайкӑсемпе болтсем тупӑннӑ.

— Ку—тӑшмансен алли тунӑ ӗҫ!—тет стахановӗц Василий Горйачӗв хӗрӳленсе. Вӑл малтанхи вӑхӑтра, савӑта ӗҫлеме килсенех, машинӑ сассинчен хӑранӑскер, халӗ ӳссе ҫитсе, куллен ӗҫре вӗренсе пырса, слесӑртан машинис пулчӗ.

Савӑтра вӗренӳ чӑн та питӗ пысӑк вӑй пулса тӑнӑ. Вӗренмесен намӑс тесе шутлаҫҫӗ ҫамрӑксем. Комсомол комитечӗн ҫекретарӗ Йегорушкин йулташ комитета суйличчен тимӗрҫ цехӗнче маҫтӑр пулса ӗҫленӗ, халӗ вӑл кунӗ-кунӗпе комсомол ӗҫӗнче вӗриленсе ҫӳренӗ хыҫҫӑн, ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе алгӗбрӑпа лараҭ. Унччен комсомол комитечӗн ҫекретарӗ пулнӑ Демйанков ӗҫре вӗренсе, кӑҫал транспӑрт академине кӗнӗ.

Хӑйулӑ утӑм, пысӑк пултарулӑх! Ҫакӑн пек вӗри пултарулӑхпа пурӑнаҭ Канашри вакунсем йусакан савӑтӑн комсомол коллективӗ.

Савӑт коллективӗ социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршыва сыхлама, паттӑр Хӗрлӗ Ҫар ваҭҭи те паха кадрсем хатӗрлет. Кӑҫал кӑна савӑт Хӗрлӗ Ҫара 111 ҫын ӑсатрӗ.

Тӑван ҫӗршывшӑн ку—чи пысӑк парне!

Канаш, ВРЗ.

ХАСТАРЛӐ КОМСОМОЛӖЦ

Иҭйа Стеклов комсомола кӗриччен хӑйусӑр, именчӗк ача пулнӑ. Урӑхла пулма та пултараймӑн. Ашшӗ унӑн империалисӑмлӑ вӑрҫӑра вилнӗ. Тӑлӑха йулнӑ Иҭйа ҫын патӗнче пурӑннӑ. Вӑл ҫырӑва та вӗренеймен.

Комсомол ретне кӗрсен Стеклов политикӑлӑ пурнӑҫа хутшӑннӑ, ӗҫленӗ, вӗреннӗ.

Колхоз йухӑмӗ Иҭйене тата хастарлӑрах ӗҫлеме ҫул уҫса панӑ. Малтанах вӑл колхозник-опытник пулнӑ. Хӑйӗн ӗҫне вӑл йуратса тӗплӗ туса пынӑ.

Колхозниксем унӑн пултарулӑхне кура, Стеклова бригадире суйлаҫҫӗ. Хаҭ вӑл колхоз председателӗн заместителӗ.

Ленинла-Сталинла комсомол 20 ҫул тултарнине кӗтсе илнӗ май, вӑл хӑйсен „Ырашпулӑх“ колхозникӗсемпе пӗрле чукунҫул строителствинче хастарлӑ ӗҫлерӗ, ӗҫ нормине ытлашшипех тултарса колхозниксене пример кӑтартса пычӗ.

ПСҪЛКС Ишлей райкомӗ И. Стеклов йулташа парти ретне кӗме рекомендаци пачӗ.

Гер. Щербаков.

— о —

Комсомолӗцсем йертсе пырас ӗҫре

ШАХАСАН. Колхоз ҫамрӑкӗсен политикӑлӑ активлӑхӗ кунран кун ӳссе пыраҭ. Комсомол организацийӗсем хӑйсен ретӗнче ҫамрӑксенчен пултарулӑ ҫынсем ҫитӗнтереҫҫӗ.

Хӑйсен активлӑхне кӑтартнӑ нумай комсомолӗцсене районра йертсе пырас ӗҫсене лартрӗҫ. Хаҭхи вӑхӑтра комсомолӗцсенчен 3 ҫын райӗҫтӑвком пайӗн пуҫлӑхӗсем, 22 ҫын районри учрежденисен пуҫлӑхӗсем, инспекторсем, агӗнтсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Колхоз председателӗнче 18 комсомолӗц, бригадирта—71, фермӑсен пуҫлӑхӗсем—31 комсомолӗц ӗҫлеҫҫӗ.

Районри интеллигенци хушшинче те вӗсем паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Комсомолӗцсем—76 учитӗл, 48 трактӑрис, врачсемпе феҭдшерсем 6.

Нумай комсомолӗцсем стахановла йухӑмӑн организатӑрӗсем пулса тӑчӗҫ. Кирӑв йачӗпе тӑракан колхозри комсомолӗц-бригадирсем рекордлӑ тырпул туса илчӗҫ. Комсомолӗц-трактӑриссем Моисейӗв, Филиппӑв, Ваҫилйӗв йулташсем хӑйсен кулленхи нормине 200—250 процентшар тултарса пычӗҫ.

Йертсе пырас ӗҫе лартнӑ комсомолӗцсем хӑйсен обйазӑннӑҫӗсене тивӗҫлипе пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Ив. Федотӑв.

Комсомола кӗчӗҫ

ЕЛӖК. Йӳҫкасси вӑтам шкулӗнчи комсомолӗцсемпе сойузра тӑман ҫамрӑксем пӗр журнал кӑларчӗҫ, сӑвӑсем, калавсем хатӗрлерӗҫ.

Ултӑ ҫамрӑк ача комсомола кӗчӗҫ.

В. Петров.

ПСҪЛКС 20 ҫул тултарчӗ

Ленинла-сталинла комсомолӑн историйӗ ПСК(б)П историйӗпе, пирӗн тӑван ҫӗршыври ӗҫхалӑхӗ боӆшевиксен партийӗ йертсе пынипе совет влаҫӗшӗн, социалисӑмшӑн кӗрешнин историйӗпе уйӑрӑлми ҫыхӑнса тӑраҭ.

Комсомол боӆшевиксен аслӑ партийӗпе унӑн ҫулпуҫӗсем Ленин тата Сталин куллен пулӑшса, йертсе пынипе ҫуралса ӳснӗ, аталаннӑ, чаплӑ ҫитӗнӳсем тунӑ. Боӆшевиксен партийӗ йертсе пыни комсомола вӑй-хӑват тата тӗреклӗх парса тӑраҭ.

Революцин ҫамрӑк резервисене Ленинпа Сталин йаланах пысӑк вырӑна хунӑ. Ӳссе хӑпаракан революцилӗ событисенче ҫамрӑксем уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнмалине паллӑ туса, 1905 ҫулта, Росҫийӑри пӗрремӗш буржуалӑ-демократилӗ революци умӗн, Ленин ҫамрӑксене партине хӑйулӑн та анлӑн йавӑҫтармали, самодержавине хирӗҫ кӗрешме ҫамрӑксенчен халӗх ҫапӑҫу дружинӗсем тумали ҫинчен астутарнӑ:

„Хаҭ вӑрҫӑ вӑхӑчӗ, — ҫырнӑ В. И. Ленин.—Ҫамрӑксем, шкулта вӗренекеннисем те тата вӗсенчен те ытларах рабочи ҫамрӑксем, пӗтӗм кӗрешӳ ӑнӑҫлӑхне татса параҫҫӗ“ [1]).

„Хӑйулӑнах ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ дружинӑсем тӑвӑр, вӗсене ҫапӑҫӑва йарӑр, ытларах рабочи ҫамрӑксене йавӑҫтарӑр“ [2]).

Ленин чӗнӗвне ҫамрӑк пролетарисем хӗрӳлӗн йышӑннӑ. 1905 ҫ. декабӗрте Мускавра пулнӑ хӗҫпӑшаллӑ восстанин паттӑр кунӗсенче ҫамрӑксем рабочисен ҫапӑҫулӑ дружинӗсен малти речӗсенче тӑнӑ.

1917 ҫ. февраӆте самодержавине ишсе антарни ҫамрӑксен пролетарилӗ йухӑмне ӳссе сарӑлма хӑватлӑн тӗртсе йанӑ. 1917 ҫ. март-апреӆ уйӑхӗсенче пур вырӑнсенче те ҫамрӑксен организацийӗсем чӑмӑртанма пуҫланӑ. Нимрен ытларах, вӗсем боӆшевиксен парти комитечӗсем пуҫарнипе чӑмӑртанса пынӑ, вара малтанхи кунсенчен пуҫласах вӗсем йертсе пынипе ӗҫленӗ.

Боӆшевиксен партийӗн VI-мӗш сйесӗ, 1917 ҫ. август уйӑхӗнче, Октӑбӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ революци умӗн пуҫтарӑннӑскер, ҫамрӑксен суйузӗсем ҫинчен уйрӑм решени йышӑннӑ:

„Хаҭхи вӑхӑтра, рабочи клас кӗрешӗвӗ тӳрремӗнех социалисӑмшӑн кӗрешес сыпӑка куҫнӑ чухне, сйес рабочи ҫамрӑксен класлӑ социалисӑмлӑ организацисенӗ тӑвассине пулӑшасси ҫак самантра ҫине тӑрсах тумали задачӑсенчен пӗри тесе шутлаҭ тата парти организацисене ҫак ӗҫ ҫине май килнӗ таранах хытӑ ҫавӑрӑнса пӑхма хушаҭ“.

Ҫамрӑксен сойузӗсем тӳрремӗнех парти йертсе пынипе ӗҫлекен массӑлӑ организацисем пулса тӑмала, вӗсен задачи — ҫамрӑксене коммунисӑм шухӑшӗпе вӗрентсе ӳстерессипулаҭ, тенӗ VI-мӗш сйес.

Партин VI-мӗш сйесӗ хыҫҫӑн ҫамрӑксен йухӑмӗ анлӑн сарӑлса кайнӑ, ҫамрӑксен сойузӗсем хӑвӑрт ӳсме пуҫланӑ.

Хӗҫпӑшаллӑ восстанине хатӗрленӗ ҫӗрте пролетари ҫамрӑкӗсем активлӑн хутшӑнса ӗҫленӗ. Октӑбӗрти хӗҫпӑшаллӑ восстани кунӗсенче Ленин рабочи ҫамрӑксен восстанири ӗҫӗпе вырӑнӗ ҫинчен ҫапла каланӑ:

„Пирӗн чи хӑйулӑ елементсене (пирӗн „ударниксене“, рабочи ҫамрӑксене тата ҫавӑн пекех чи лайӑх матроссене) чи кирлӗ пунктсене йышӑнса илме тата пур ҫӗрте те, пур кирлӗ операцисенче те хутшӑнса ӗҫлеме уйрӑм пӗчӗкрех отрйадсене уйӑрмала...“

Октӑбӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ революци ССР Сойузӗнчи ӗҫсынни ҫамрӑкӗсен сарлака массисене ҫӗклесе активлӑ политикӑлӑ пурнӑҫа йавӑҫтарнӑ.

Боӆшевиксен партийӗ ҫамрӑксен сойузӗсен пӗтӗм Росҫийӑри пӗрремӗш сйесне пухассине хатӗрленӗ. Сйес 1918 ҫ. октӑбӗрӗн 29-мӗшӗнче Мускавра пуҫтарӑннӑ. Ҫамрӑксен сойузӗсенче тӑракан 22.100 членран сйесра 176 делегат пулнӑ. Сйес пирӗн ҫӗршыври ҫамрӑксен организацийӗсене пӗр сойуза—Росҫийӑри Ҫамрӑксен Коммунисла Сойузне (РҪКС) пӗрлештернӗ, ҫапла вара комсомола политикӑ тата организаци тӗлӗшӗнчен йӗркеленӗ.

РҪКС-н пӗрремӗш сйесӗ, боӆшевиксен партийӗ тата В. И. Ленин тӳрремӗнех йертсе пынипе иртнӗскер, комсомолӑн тӗп задачине ҫапла палӑртнӑ:

„Сойуз Росҫийӑри Коммуниссен (боӆшевиксен) партийӗпе пӗр шухӑшлӑ. Сойуз хӑй умне коммунисӑм идейӗсене сарас тата рабочипе хресчен ҫамрӑкӗсене Совет Росҫийӗн строитӗлствине активлӑ хутшӑнтарас тӗллев лартаҭ“.

Граждӑн вӑрҫин хӑрушӑ ҫулӗсенче комсомолӑн пӗтӗм ӗҫӗ социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршыва сыхлас задачӑсенчен тухса тӑнӑ. Ҫав ҫулсенче виҫӗ хутчен пӗтӗм Росҫийӗпе мобилизаци иртернӗ, вӗсем Хӗрлӗ Ҫара 25 пин комсомолӗц панӑ. Фронт ҫывӑхӗнчи комсомолӗцсем пӗтӗм организацийӗпе фронта кайнӑ.

Интервентсемпе шургвардейцӑсен ҫарӗсене хирӗҫ комсомолӗцсем питӗ пысӑк хӑйулӑхпа, паттӑррӑн ҫапӑҫнӑ. Вуншар пин ҫамрӑксемпе хӗрсем хӑйсен социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршывӗшӗн ҫапӑҫса паттӑрсен вилӗмӗпе вилнӗ.

Граждӑн вӑрҫинчи паттӑр ӗҫсемшӗн Совет Правитӗлстви комсомола Хӗрлӗ Иалав орденӗ панӑ.

Граждӑн вӑрҫи пӗтрӗ. Боӆшевиксен партийӗ пӗтӗм вӑйсене халӑх хуҫалӑхне аталантарма параҭ. Комсомол кунта та партин активлӑ помошникӗ пулса тӑраҭ.

1920 ҫ. октӑбӗрте РҪКС-н III-мӗш сйесӗ пуҫтарӑннӑ. Сойузӑн шалти ӗҫ ыйтӑвӗсем тата ӳсекен ӑрӑва коммунисла воспитани парас ыйтусем сйесра тӗп вырӑн йышӑннӑ. Ҫак сйесра В. И. Ленин тухса каланӑ. Хӑйӗн историлӗ сӑмахӗнче,—вӑл сӑмах комсомолӑн пӗтӗм ӗҫӗсен программи пулса тӑчӗ,—В. И. Ленин комсомолӑн ҫамрӑксене коммунисла пӑхса ӳстерес тата вӗрентес ӗҫри задачисене паллӑ туса тухнӑ. Ленин каланӑ:

„... Ҫамрӑксен сойузӗн тата коммунисӑма куҫма ӗмӗтленекен пӗтӗм ҫамрӑксен коммунисӑма вӗренес пулаҭ“.

„Ҫамрӑксен коммунисла сойузӗ, хӑйӗн вӗренӗвӗн, воспитанийӗн, образованийӗн кашни утӑмне пӗтӗм ӗҫхалӑхӗн експлуататӑрсене хирӗҫ пыракан пӗтӗм кӗрешӗвне хутшӑнса ӗҫлессипе ҫыхӑнтарсан ҫеҫ, хӑйӗн йатне, хӑй чӑнах та коммунисла ҫамрӑк ӑрӑвӑн сойузӗ пулнине тӳрре кӑларма пултараҭ“.

1928 ҫулти май уйӑхӗнче, комсомолӑн VIII-мӗш сйесӗнче каланӑ сӑмахӗнче Сталин йулташ комсомолӑн пирӗн ҫӗршывра социалисӑм тӑвассишӗн кӗрешнӗ ҫӗрти ӗҫӗн программине палӑртса хунӑ. „Пролетариатӑн ҫапӑҫу хатӗрлӗхне вӑйлатас задачӑ пирӗн ҫӗршывра классем пур чухне тата пирӗн капиталисӑмлӑ йӗри-тавралӑх пур чухне пирӗн пӗтӗм ӗҫе витӗр кӗрсе тӑмали задачӑ пулаҭ“, тенӗ Сталин йулташ.

Пӗтӗм халӑх хуҫалӑхне социалисӑмлӑ реконструкцилессишӗн анлӑн кӗрешӳ пуҫланнӑ май, Сталин йулташ комсомол умне боӆшевик-специалиссен ҫӗнӗ ҫамрӑк кадрӗсене хатӗрлес задачӑ лартнӑ.

„Наукӑна алла илмеле, пӗлӳлӗхсен пур отрӑҫлисем тӑрӑх та боӆшевик-специалиссен ҫӗнӗ кадрӗсене хатӗрлемеле, вӗренмеле, вӗренмеле, ҫине тӑрсах вӗренмеле—задачӑ халӗ ҫавӑн пек. Революцилӗ ҫамрӑксен наукӑна поход тумала—акӑ мӗн кирлӗ хаҭ пире, йулташсем“, тенӗ Сталин йулташ.

Ҫулпуҫ кӑтартнисемпе хавхаланнӑ ленинла-сталинла комсомол хӑйӗн пӗтӗм вӑйӗсене социалисӑмшӑн кӗрешме мобилизацилерӗ. Сӑтӑрҫӑсемпе кӗрешсе, кулакла саботажа тӑпӑлтарса аркатма пулӑшса, йӑвӑрлӑхсемпе кӗрешес ӗҫре калама ҫук паттӑрлӑх кӑтартса комсомол хӑй боӆшевиксен партийӗн шанчӑклӑ помошникӗ пулнине тӳрре кӑларчӗ.

Чи ответлӑ та йӑвӑр участкӑсенче ӗҫлеме ПСҪЛКС Тӗп Комитечӗ ҫӗршер пин комсомолӗц йачӗ. Пӗрремӗш сталинла пилӗкҫуллӑхра кӑна социалисӑм строитӗлствин чи ответлӑ участкисене комсомол 350 пин ытла чи лайӑх комсомолӗцсене йачӗ. Пӗр 1929 ҫултах комсомолӗцсен вӑйӗпе 5 пин ытла колхоз тунӑ.

Коммуниссен партийӗ пӑхса ӳстернӗ комсомол социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва пуҫараканни пулчӗ. Техникӑна вӗренессишӗн кӗрешнӗ ҫулсенче комсомол стахановла йухӑма сарас ӗҫре калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнчӗ.

Ленинла—сталинла комсомолӑн социалисӑмшӑн кӗрешес фронтсенчи мухтавлӑ ӗҫӗсене партипе правитӗлствӑ тивӗҫлипе хакларӗҫ,—ҫав ӗҫсемшӗн 1931 ҫулти йанварте правитӗлствӑ ӑна Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Иалав орденӗ пачӗ. Ударлӑ ӗҫленӗшӗнех комсомолӑн Днепрострой, Донбасс, Мускав организацийӗсене Ленин орденӗсем панӑ.

Комсомолӑн X-мӗш сйесӗ ПСҪЛКС-ӗн ҫӗнӗ программипе уставне йышӑнчӗ. Вӑл программӑпа устава Сталин йулташ йертсе пынипе, вӑл кӑтартнисем тӑрӑх ҫырса хатӗрленӗ. Комсомолӑн коммунисӑмшӑн кӗрешес ӗҫри задачисене ҫӗнӗ программӑпа устав сталинла тӳрӗлӗхпе, уҫҫӑн кӑтартса пачӗҫ.

Совет государствин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене тӑвас ӗҫе комсомол йаланах активлӑ хутшӑннӑ. 1922 ҫулта комсомол хамӑр ҫӗршывӑн Тинӗс-Ҫар флотне шефа илчӗ. 1931

(Йулашки 4-мӗш страницӑра)

1) Ленин. Соч., т. VII, стр. 102.
2) Ленин. Соч., т. VII, стр. 149.

ҪĔРУЛМИ ХАТĔРЛЕВĔ

Пайан-ыранах тултарассишĕн кĕрешеҫҫĕ

КАНАШ (телефон тăрăх). Канашри ҫĕрулми йышăнакан базăн Мускав хули валђи 3 пин тоннă ҫĕрулми хатĕрлесе, ăна октябĕрĕн 27-мĕшĕнче пĕтĕмпех тийесе ăсатмала пулнă. Ҫак вирлĕ заданийе Канаш районĕнчи партипе совет тата хатĕрлев организацийĕсем вăхăтра пурнăҫа кĕртеймерĕҫ. Октябĕрĕн 27-мĕшне хатĕрленĕ ҫĕрулмирен 1007 тоннă ҫеҫ Мускава ăсатнă. Йулашки 220 тоннă валђи вăхăтра вакунсем паман пирки октябĕрĕн 28-мĕшĕнче ирхине тин тийесе йамала килчĕ.

Государствăна ҫĕрулми тăратас плана тултарассипе кайа йулнă йалсоветсене пулăшма районри активран ҫынсене йанă, анчах вĕсен ĕҫĕсем сахал курăнаҫҫĕ-ха. Пайан ҫав йулса пыракан йалсоветсенех пулăшма тепрер ҫын йаратпăр.

Хăшпĕр колхозсенчен ҫĕрулмине суйламасăрах тийесе пынипе базăра тепĕр хут суйламала пулат. Октябĕрĕн 26-мĕшĕнче кайала илсе кайнисем те пулкаланă.

Епĕр Мускава ҫĕрулми тийесе йарас плана пайан-ыранах тултарассишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕҫлетпĕр.

Плана ытлашшипех тултарнă

Пахча-ҫимĕҫ сойузĕн Шупашкарти кантурĕн Мускаври рабочисем валђи 300 тоннă ҫĕрулми хатĕрлесе тийесе йамала пулнă. Октябĕрĕн 27-мĕшĕнче государствăна ҫĕрулми памалли план шутĕнчен 338 тоннă хатĕрлесе пĕтĕмпех Мускав валђи тийесе ăсатнă.

Сарра.

— о —

Кĕрсе ăшăнма ҫурт кирлĕ

ҪĔМĔРЛЕ. Государствăна ҫĕрулми тăратас плана 50 процента йахăн тултарнă. Октябĕрĕн 27-мĕшĕнче 44 тоннă ҫĕрулми йышăннă. Вакунсем ҫуккипе чукунҫулнă. Вакунсем ҫуккипе чукунҫул ҫинче 300 тоннă ытла ҫĕрулми пухăннă. Пайан вакунсем памасан, йышăннă ҫĕрулмине хума вырăн пулмаст.

Районри хатĕрлев организацийĕсем ҫĕрулми пама пыракан ҫынсем валђи кĕрсе ăшăнма кĕтес те хатĕрлемен. Пына ҫынсен апатланас мĕн пулсан пĕр икĕ ҫухрăм айакка кайас пулат.

— о —

Хастарлăха чакармала мар

Чăваш республикĕн Мускав хули валђи 13 пин тоннă ҫĕрулми хатĕрлесе памала. Октябĕрĕн 28-мĕшне плана пурĕ те 49,2 процент ҫеҫ тултарнă. Плана пурнăҫа кĕртесси ҫаплах йулса пырат.

Октябĕрĕн 27-мĕшĕнче республикĕпе 900 тоннă ҫĕрулми хатĕрленĕ пулсан, октябĕрĕн 28-мĕшĕнче унтан та начар ĕҫленĕ. Ĕнер пурĕ те 587 тоннă хатĕрленĕ, 529 тоннă тийенĕ.

Плана ҫак кунсенчех тултарма пĕтĕм вăйа хурса ĕҫлемеле.

Еҫе хăвăртлатмала

ВĂРМАР. Районра государствăна ҫĕрулми тăратас плана тултарасси питĕ ҫителĕксĕр пулса пырат. Октябĕрĕн 28-мĕшне пĕр йалта, пĕр колхоз та хăйсен обйазательствине тултарни ҫук. Йединоличник хуҫалăхĕсем ҫĕрулми хатĕрлев планне пурĕ те 25 процент ҫеҫ тултарнă.

Вăрмар районĕн Мускав валђи 400 тоннă ҫĕрулми хатĕрлесе йамала. Октябĕрĕн 27-мĕшне пурĕ 104 тоннă хатĕрленĕ. Ҫав кунах 14 тоннă тийесе Мускава ăсатнă. Пайанхи куна вакун ҫуккипе 147 тоннă ҫĕрулми выртат.

Ҫидăрăв.

— о —

Вакунсем вăхăтра памаҫҫĕ

ЙĔПЕҪ. Октябĕрĕн 28-мĕшне Мускав валђи 232 тоннă ҫĕрулми хатĕрленĕ. Ҫĕрулми кулленех килсе тăрат. Хатĕрленĕ ҫĕрулмине тийесе йама вăхăтра вакунсем параманнипе пурĕ те 59 тоннă ҫеҫ тийесе йанă. Пайанхи куна 8 вакун кирлĕ, вĕсем хăҫан пуласси паллă мар-ха.

Михайлăв.

— о —

Малта пырат

„Алино" колхоз (Ишлей р.) Аслă Октябĕр революҫи уйаве умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, йалхуҫалăхĕнче пысăк ҫитĕнӳсем туса пырат. Ăмăртура Краснов йулташ йертсе пыракан 4-мĕш бригада малта пырат. Унăн бригади авăн ҫапса пĕтерсе, патшалăха тыра та, пахча-ҫимĕҫсене те парса татрĕ. 24 гектар ҫинче кĕрхи ҫĕртме турĕ. Ҫак кунсенчех 20 лаша валђи вите туса пĕтереҫҫĕ.

Г. Ҫеребрйаков.

— о —

Отпуска тухнă

Йалхуҫалăх ертелĕн сталинла уставĕ тăрăх, йавăр ҫын хĕрарăмсене ача ҫуратас умĕн пĕр уйăх малтан, ача ҫуратнă хыҫҫăн тепĕр уйăх хушши ĕҫрен хатармала.

Калинин йачĕпе тăракан колхозра (Трак р.) йавăр ҫын пулнă хĕрарăмсем 10 пулнă. Халђ правленилаăвĕнче йавăр ҫын пулнă колхозницăсен ытăвĕсене пăхса тухса вунă колхозницăна икшер уйăхлăха отпуск пачĕҫ.

Ф. Трофимăв.

Ленинла-сталинла комсомол 20 ҫул тултарнă тĕле

Комсомол 20 ҫул тултарнă тĕле парне хатĕрлес йатпа Осоавиахимăн Шахтинский хула совечĕ ҫамрăк пулеметчиксен ушкăнне вĕрентсе кăларат, вĕсем пулемет ĕҫне производствăран уйăрăлмасăрах вĕренеҫ.

ӲКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: курсант-отличниксем зачотлă тактикăлă занятисенче. Сулахайра — Шахтинский трамвай паркĕн вагоновожатăйĕ Н. И. Титов, унпа йунашар — комсомолеҫ В. К. Титурук.

(„Пресклише").

„Родина" самолђот екипажĕ Мускавра

Халăхăн паттăр хĕрĕсене савăнăҫлăн кĕтсе илни

Октябĕрĕн 27-мĕшĕнче столица ĕҫҫыннисем Совет халăхĕн паттăр хĕрĕсене савăнăҫлăн кĕтсе илнĕ. Мускав мĕн иртенех тумланнă. Белорусски вокзал патне кайакан Горький урамне флагсемпе, плакатсемпе илемлетсе пĕтернĕ. Ҫуртсем ҫинче чаплă лђотчицăсен портречĕсем. 14 сехет тĕлне урамăн икĕ йенĕпе столицăри вуншар пин ĕҫҫынни йĕркипе тăрса тухнă. Белорусски вокзал плошчадĕ халăхпа тулса ларнă.

Пуйас килсе ҫитнĕ тĕле вокзала Л. М. Каганович, Н. С. Хрущчов, М. М. Каганович, Буденный, Локтионăв, Бадайĕв, Йарославский йулташсем пырса ҫитеҫҫĕ. Кунтах Совет Сойуз Геройĕсем—Молокăв, Чкалăв, Громăв, О. Иу. Шмидт, Папанин, Водопйанăв, Белђаков, Байдуков, Данилин, Спирин, Слепнђов, Серов, Кренкелђ йулташсем, ССРС тата РСФСР Верховнай Совечĕсен депутачĕсем, авиатăрсем, самолђот конструктăрĕсем.

14 сехет те 30 минут. Платформă патĕнче пуйас чарăнат. Хыттăн авиаци маршĕ кĕрлесе кайат. Ала ҫупаҫҫĕ. Вакунран тухакан Валентина Гризодубăва, Полинă Осипенко, Маринă Раскова йулташсене хыттăнрах та хыттăнрах саламлаҫҫĕ. Вĕсемпе пĕрле Инҫет Хĕвелтухăҫĕнчен ăсатма килнĕ йулташсем. Лђотчицăсене чечексем параҫҫĕ, таванĕсем, правительства членĕсем, Совет Сойуз Геройĕсем сывлăх сунаҫҫĕ.

Виҫĕ паттăр лђотчица хисеплĕ караултан рапăрт йышăнаҫҫĕ те, вокзалран тухаҫҫĕ.

Вокзал умĕнчи плошчĕдре митинг уҫалат.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Ҫарĕн Сывлăш-ҫар вăйĕсен началђникĕ иккĕмĕш рангри командарм А. Д. Локтионăв йулташ вĕсеве организацилене Правительствă Комиҫҫийĕ тата Сывлăш-ҫар вăйĕсен йачĕпе Валентина Гризодубăва, Полинă Осипенко, Маринă Раскова йулташсене хĕрӳлĕ салам калат тата пĕтĕм тĕнчипе хĕрарăмсен рекорчĕ тунă йатпа ыра сунат.

Малтанхи сăмаха ПСК(б)П Тĕп Комитет ҫекретарĕ—ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителе Л. М. Каганович йулташа параҫҫĕ.

Л. М. Каганович йулташ микрофон умне тухса тăнине пĕтĕм халăх нумайччен чарăнмасăр алă ҫупнипе хапăл туса илет, аслă Сталинпа унăн йулташĕсен йачĕпе, паттăр лђотчицăсен йачĕпе саламлă сăмахсем калат.

Ответлă сăмахпа „Родина" самолђот командирĕ Валентина Ҫтепанавнă Гризодубăва тухат.

— Епĕр телейлĕ,—тет Гризодубăва йулташ,—коммуниссен партинчен, правительствăран, аслă Сталин йулташран илнĕ заданине пурнăҫланăшăн.

Циклонсем витĕр, тĕтрелĕ тĕттĕм каҫ витĕр епĕр хамăр самолђотăн кĕмĕл ҫуначĕсем ҫинче пĕтĕм Совет халăхĕ йуратакан савăнăҫлă Таван Ҫĕршыв сăмаха илсе пытамăр. Совет савăчĕсенче ĕҫ геройĕсем — стахановĕҫсем, конструктăрсем, инженерсем тунă хамăр самолђот, хамăр моторсем тĕрĕслевĕрен чаплăн тухрĕҫ.

Инҫетри тайгара, шурлăхра, „Родина" самолђот екипажĕ хăйне пĕр-пĕччен туймарĕ. Пире куҫа курăнман йĕрсем нумай нациллĕ, нумай мĕлйунла совет халăхĕпе ҫыхăнтарса тăчĕҫ. Пире коммуниссен партийĕ хавaслăх парса тăчĕ, пире ҫĕнтерӳ патне ҫулпуҫĕ, учитĕл, тус Сталин йулташ илсе пычĕ.

Гризодубăва йулташ сăмах калана чухне темиҫе хутчен тăвăллăн ала ҫупаҫҫĕ.

Митинг пĕтет. Валентина Гризодубăва, Полинă Осипенко, Маринă Раскова правительствă членĕсемпе, тăванĕсемпе пĕрле чечексемпе илемлетсе пĕтернĕ машинсем ҫине лараҫҫĕ.

Автомобилсен колонни Горький урамĕпе кайат. Савăнакан халăх хăйĕн паттăр хĕрĕсене хĕрӳлĕн ала ҫупса тĕлпулса илет. Москвичсем кантаксенчен, балконсем ҫинчен чечексем, листовкăсем параҫҫĕ.

Пĕтĕм Мускав ытамларĕ, саламларĕ, ыра сунчĕ „Родина" самолђотăн чаплă екипажне.

(ТАСС).

ПСҪЛКС 20 ҫул тултарчĕ

(Йулашки)

ҫулта комсомол Сывлăш-ҫар флотне шефа илчĕ. Хăйĕн чи лайăх членĕсене комсомол Тинĕс-ҫар флочĕпе Сывлăш-ҫар флотне, ҫар училишчисене вуншар пин йачĕ. Таван ҫĕршывăн оборонă хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе комсомолĕҫсем пĕтĕм вăйа хурса ĕҫлеҫҫĕ. Совет патриотисăмĕн калама ҫук паха тĕслĕхĕсене тата хăйсен паттăрлăхне, ҫапăҫури пысăк пултарулăхне, ҫар техникипе лайăх усă курма пĕлнине комсомолĕҫсемпе ҫамрăксем Хасан кӳлли патĕнче иртнĕ ҫапăҫусенче питĕ лайăх кăтартрĕҫ.

„Нимĕнле „ăнсăртлăх" та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен ҫĕртен килсе ан тивччĕр тесе, хамăрăн пĕтĕм халăха вăрҫăпа килсе тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизациллĕ хатĕр тытса усрамала",—аслă Сталинăн ҫак кăтартăвне комсомолĕҫсем, совет ҫамрăкĕсем йаланах асра тытаҫҫĕ.

Халăх тăшманĕсем, фашисăмăн троцкисла - бухаринла агĕнчĕсем пĕрре кăна мар ҫамрăксен коммунисла сойузне ленинла-сталинла ҫул ҫинчен пăрса каларма, комсомола болђшевиксен партинчен туртса илме хăтланнă. Халăх тăшманĕсен хăтланăвĕсене хирĕҫ комсомол йаланах тăшмансене хăйарран аркатнипе, коммуниссен партийĕпе унăн Тĕп Комитечĕ тавра тата тачăрах пĕтĕҫнипе ответленĕ, ответлет те.

Ленинла-сталинла комсомол парти тăшманĕсемпе, социалисăм тăшманĕсемпе кĕрешсе ӳснĕ, тĕрекленнĕ. Парти йертсе пынипе, комсомол хăйĕн речĕсене фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агĕнчĕсенчен, шпионсенчен, диверсантсенчен тасатас тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕҫсем туса иртерчĕ.

Комсомол ҫирĕп болђшевиксене пăхса ӳстерет, хăйĕн чи лайăх ывăлĕсене коммунисла парти ретне парат. ПСҪЛКС чăмăртаннă хыҫҫăн иртнĕ малтанхи 15 ҫул хушшинчех ПСК(б)П ретне 891 пин комсомолĕца йышăннă.

Ленинла-сталинла комсомолăн задачи—совет ҫамрăкĕсене коммунисла пăхса ӳстересси, пур йенчен те вĕрентесси ҫинчен револђуцин аслă ҫулпуҫĕсем Ленин тата Сталин каланисене пурнăҫа кĕртесси пулат.

Марксисăм-ленинисăмăн револђуциллĕ теорине, Пĕтĕм Сойузри коммунисла парти историне ҫине тăрсах, тĕплĕн вĕренмесĕр ҫамрăксене коммунисла пăхса ӳстерме ҫук. Болђшевиксен партийĕн историйĕ—ҫамрăксене коммунисла воспитани памалли хăватлă хĕҫпăшал пулат. Ҫакăнтан пирĕн ҫамрăксем револђуци опытне туйанса пырĕҫ, болђшевиксен кĕрешӳре ҫĕнтерес искусствине вĕренĕҫ, Ленинăн-Сталинăн аслă партийĕн кĕрешӳпе ҫĕнтерӳсен чаплă ҫулĕ ҫинчен пĕлĕҫ.

Хăй ҫуралнăранпа 20 ҫул тултарнă тĕле комсомол болђшевиксен партийĕпе унăн Сталинла Тĕп Комитечĕ тавра, аслă ҫулпуҫ тата учитĕл Сталин йулташ тавра тача пĕтĕҫнипе пырат.

Совет искусствин праҫникĕ

Художĕствăлă театр 40 ҫул тултарнă йатпа пулнă чаплă лару

Октябĕрĕн 27-мĕшĕнче Мускаври Горький йачĕпе тăракан художĕствăлă Академи театрĕнче театр 40 ҫул тултарнă мухтавлă кун йачĕпе йубилейлă чаплă лару пулнă.

Йубилейлă ларура пулнă: сойузлă республикăсенчи тата ҫĕршывăн пысăк хулисенчи искусствă работникĕсен нумай делегацийĕсем, обшчĕствăлă ĕҫри паллă деятелсем, столицăри искусствă маҫтăрĕсем, писатĕлсем, художниксем, Мускаври предприйатисенчи рабочисем, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Ҫарĕн представителĕсем.

Правительствă ложи ҫинче — И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Е. Ворошилăв, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов, Н. С. Хрушчов, Н. А. Булганин йулташсем.

Сценă ҫинче — совет искусствин паллă маҫтăрĕсемпе тата художĕствăлă театрăн чи ватă деятелĕсемпе пĕрле пĕтĕм театр коллективĕ. ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫумĕнчи Искусствă ĕҫĕсен Комитечĕ йачĕпе М. Б. Храпченко йулташ саламлă сăмах тухса калат.

Ҫĕршывăн чи ватă актрисисенчен пĕри — ССРС Верховнай Совечĕн депутачĕ, ССР Сойузĕн халăх артиски Й. П. Корчагина-Александровскайа хумханулă сăмах тухса калат.

— Хаклă тусăмсем! — тет вăл йубилђарсене. — Совет искусствин калама ҫук пысăк пĕтĕм ҫарĕн йачĕпе сире салам. чĕререн салам калама тӳр килчĕ мана.

Лайăх калана Константин Сергейĕвич Станиславский: „Болђшевиксем пурнăҫра та, искусствăра та чăнлăха йуратаҫҫĕ." Партири тата партире тăман болђшевиксем сирĕн театра шăпах ҫавăншăн йуратаҫҫĕ те ĕнтĕ, йуратат ăна пĕтĕм совет халăхĕ.

Сирĕн кулђтурăпа искусствă аталанса ӳссе пынăшăн, ҫак ҫулсенче художĕствăлă театр ӳссе чечекленнĕшĕн, — хамăрăн партийе тата хамăрăн хаклă Сталин йулташа тав тăватăп.

Корчагина - Александровскайа йулташăн йулашки сăмахĕсем хыҫҫăн залра оваци тăвăл пек кĕрлесе кайат. Пурте ура ҫине тăраҫҫĕ. Кĕрлет „Интернационал". Алă ҫупни тата „урра" кăшкăрнисем нумай минут хушши аслати пек кĕрлесе тăраҫҫĕ.

Художĕствăлă театр Сталин йулташ йачĕпе ҫырнă ҫырăва ССР Сойузĕн халăх артисĕ Л. М. Леонидăв йулташ калама ҫук вăйлăн, чĕререн хавхаланса вуласа парат.

Залри пĕтĕм халăх Сталин йулташа чысласа тăвăллă оваци тăвăт.

Йубилейлă вечĕр вĕҫĕнче ҫĕршыври тата художĕствăлă театрти чи паллă артиссем выступленисем туса панă.

(ТАСС).

Чилири президент суйлавĕсенче халăх фрончĕ ҫĕнтернĕ

НЬЙУ-ЙОРК, октябĕрĕн 26-мĕш. Йунайтед пресс агентстви Сант-Йагоран (Чили столици) пĕлтернĕ тăрăх, Чили президентне халăх фрончĕ партин членне Педро Агиррене суйланă. Чилире ĕнер пулса иртнĕ президент суйлавĕсенче Агирре пуринчен те нумайрах саса илнĕ. Сылтăм коалицири реакциллĕ партисен кандидачĕ Густаво Росс ҫак суйлавсенче ҫитĕнӳ тăвайман, вăл суйлавсенче Агирререн 7 пин сасă сахалрах илнĕ.

Чилири ҫак президент суйлавĕ Латин Америкинчи ҫĕршывсен политикăлă пурнăҫĕнче чылайах пысăк события пулса тăрат. Демократиллĕ вăйсен пĕрлешĕвĕ президент суйлавĕсенче ҫапла ҫĕнтерни ҫак ҫĕршывсен историнче пирвайхи хут пулнă-ха. Халăх фронтне кĕнĕ коммунисла, социалисла, радикалла партисем тата ытти прогрессивлă партисем реакциллĕ партисен коалицине хирĕҫ тăрса ҫĕнтерме пултарчĕҫ.

* * *

Агирре—радикалла партин членĕ. Ҫĕршывра унăн авторитечĕ пысăк та анлă, вăл педагог (Чилири университет профессăрĕ) тата обшчĕствăлă ĕҫри пысăк ҫын. Чылай ҫулсем хушши государствă ĕҫĕнче ответлă вырăнсенче, вăл шутрах министр вырăнĕсенче те ĕҫленĕ.

Сăмахне пурнăҫа кĕртрĕ

Шупашкарти „Кожупряжь" ертелĕнчи ата-пушмак йусакан 1 № цех уйăхран уйăхах плана тултараймасăр пынă. Питĕ нумай тултарнă чух та 60—70 процентран иртереймен.

Нумайах пулмаст ҫак цех заведуйушчине комсомолĕц Чечнев йулташа лартнă. Ҫавăн хыҫҫăн цех хăйĕн хăвăртлăхне ӳстерме пуҫланă.

Комсомол йубилейĕ тĕлне Чечнев йулташ цехăн планне 120 процента ҫити тултарма сăмах пачĕ. Цехра лайăх йĕрке турĕ, ĕҫ вăйĕсене тĕрĕс вырнаҫтарчĕ.

Халђ ҫак цех хăйĕн планне 120 процент, уйрăм стахановĕҫсем 150 процента ҫити тултараҫҫĕ.

Комсомолеҫ Чечнев йулташ хăйĕн обйазательствине пурнăҫларĕ.

— о —

Парнесен выставки

Октябĕрĕн 27-мĕшĕнче Шупашкарти Максим Горький йачĕпе тăракан 2-№-лĕ шкулта пионерсемпе вĕренекенсем хăйсен вожатăйĕ — ленинла-сталинла комсомол валђи хатĕрленĕ парнесен выставкине организациленĕ.

Комсомол йубилейĕ валђи чи лайăх парнесене 5-мĕш „А" клас хатĕрлене (клас руководителĕ А. В. Прохарăва йулташ). Класри пионерсемпе вĕренекенсем выставкăна ӳкерчĕксен тăватă алђбомне тăратнă, унти ӳкерчĕксем ачасен телейлĕ пурнăҫне, комсомол граждан вăрҫинче кĕрешнине тата ыт. кăтартса параҫҫĕ. Тонђа Саначинă тата Ида Тонахăвă пионеркăсем выставкăна хăйсен тĕррисене тăратнă, вăл тĕрĕсене вĕсем питĕ лайăх тунă.

Ҫак класра вĕренекен ачасенчен нумайăшĕ комсомол йубилейне „отличнă" отметкăсемпе кĕтсе илеҫҫĕ. Отличнă вĕренессишĕн мĕнле ҫине тăрса кĕрешни ҫинчен класри „Ҫамрăк пионер" ҫтена хаҫачĕпе кам мĕнле вĕреннине кăтартакан сводкă каласа параҫҫĕ. Класри драмкружок пионер шпиона тытни ҫинчен „Штрафной удар" йатлă интереслă спектаклђ тата художĕствăлă пултарулăхпа темиҫе номĕр хатĕрленĕ.

Шкул комсомол уйавне оборонăла ĕҫ йенĕпе пысăк ҫитĕнӳсем тунипе кĕтсе илет. Кашни вĕренекенĕн ПВХО значокĕ пулат, халĕ йулашки 40 вĕренекен нормăсене парса ҫитереҫҫĕ.

И. Лукинский.

Кĕскен

ИШЛЕЙ. Шетмĕпуҫĕнчи туллимар вăтам шкулта хор кружокĕ „Если завтра война", „Москва", „Песня о родине" йурăсем вĕренчĕ.

Шкулти ПВХО кружокĕнче 30 ача вĕренет. Кружока учитĕл Краснов йулташ йертсе пырат. Ҫавнашкалах „Фото", „ГТО", „БГТО" кружокĕсем ĕҫлеҫҫĕ.

А. Ҫмирнов.

ТРАК. „Йанмурзинă" колхозĕнчи пуҫламĕш организацинчи комсомолĕцсем комсомол уйавне пысăк ҫитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕҫ. Халђхи вăхăтра организацинче 43 комсомолĕц шутланат. Вĕсенчен кăҫал 4-шĕ парти кандидатне кĕчĕҫ. 7-шĕ Хĕрлĕ Ҫара кайрĕҫ. Уйава хатĕрленнĕ май 7 комсомолĕц ворошиловла тĕл пемели нормăна, 5-шĕ ПВХО нормине пачĕҫ.

А. Киҫелђов.

Колхоза кĕреҫҫĕ

1938 ҫулта Чăваш республикĕнче ҫĕнĕрен 3 колхоз организациленĕ: Шупашкар районĕнче 2, Кувакинă районĕнче 1. Республикăра пĕтĕмпе 1.691 колхоз шутланат.

Ҫавăн пекех йединоличниксем колхоза массăлăн кĕреҫҫĕ. 1938 ҫулта ҫентябĕрĕн 24-мĕш тĕлне республикăра мĕн пурĕ 9.629 йединоличник хуҫалăхĕ колхоза кĕнĕ. Вăл шутран Трак районĕнче 921 хуҫалăх, Вăрнар районĕнче 768 хуҫалăх, Хĕрлĕ Чутай районĕнче 612 хуҫалăх, Канаш районĕнче 556 хуҫалăх, Сĕнтĕрвăрри районĕнче 497 хуҫалăх, Шăхасан районĕнче 493 хуҫалăх, Елĕк районĕнче 469 хуҫалăх кĕнĕ.

— о —

Шупашкарти хоккеиссен пухăвĕ

Хĕллехи спорт ҫезонне хатĕрленес ыйтăва сӳтсе-йавма, октябĕрĕн 27-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи хоккеиссен пухăвĕ пулса иртрĕ.

Ирĕклĕ спорт обшчĕствисемпе коллективсенчен „Спартак" обшчестви ҫеҫ хĕллехи спорт ҫезонне хатĕрленме тытăннă, ытти обшчĕствăсемпе коллективсем ку тĕлĕшпе нимĕнле конкретлă ĕҫ те тумаҫҫĕ-ха.

Хоккей—хĕллехи футбол. Анчах хоккей вăййи Шупашкарта та, республикре те питĕ начар саралнă. 1936 ҫулта Шупашкарта пурĕ те 3 командă ҫеҫ пулнă, 1937 ҫулта 6 командăна ҫитнĕ. Анчах хĕрарăмсемпе ачасен пĕр командă та пулман. Ҫитес хĕллехи ҫезонра хоккей вăййи чылай малала каймала. Ҫитес ҫезонра арҫынсен 10—11 командă, хĕрарăмсен 5—6 командă тата ачасен 4—5 командă пулмала.

Пуху хулари хоккей вăййине лайăхрах организацилес тĕлĕшпе физкулђтурăпа спорт ĕҫĕн хула комитечĕ ҫумĕнче хоккей ҫекцине суйларĕ. Судйасен квалификацине ӳстерме ҫеминар организацилеҫҫĕ.

Р. Шашков.

Хроникă

** Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Иермолай Александрович БАЛАШОВ йулташа Чăваш АССР Иустици Халăх Комиссарĕн заместителне лартнă.

** Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Ваҫилий Григорйĕвич ГРИГОРЙЕВ йулташа Чăваш АССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссарĕн заместителне лартнă.

— о —

Комсомол 20 ҫул тултарнă праҫнике Шупашкарта уйавласси

** Октябĕрĕн 27-мĕшпе 31-мĕш хушшинче Шупашкар хулинчи комсомол пуҫламĕш организацисенче ленинла-сталинла комсомол 20 ҫул тултарнă йатпа савăнăҫлă ларусем туса иртереҫҫĕ.

** Пайан Чăвашсен государствă академи театрĕнче ПСҪЛКС хула комитечĕ савăнăҫлă лару туса иртерет. Унтан хулари комсомолĕцсен вăйĕпе харпăрхăй пултарулăх вечĕрĕ пулса иртет. Пайан каҫхинех колхозник ҫуртĕнче промысла кооперации ҫамрăкĕсен вечĕрĕ пулат. Вăл вечĕрта комсомол 20 ҫул тултарни ҫинчен доклад пулат.

** Строителсен клубĕнче пайан вечĕр. Вечĕрта комсомол 20 ҫул тултарни ҫинчен доклад тата строителствăри, ҫĕнĕ савăт строителствинчи ҫамрăксен вăйĕпе савăнăҫлă пайсем пулаҫҫĕ.

** Октябĕрĕн 30-мĕшĕнче Чăвашсен академи театрĕнче хулари комсомолĕцсем валђи „Огни маяка" постановкă лартса параҫҫĕ.

** Пионерсен ҫуртĕнче октябĕрĕн 30-мĕшĕнче пĕтĕм хулари костăр пулат. Октябĕрĕн 31-мĕшĕнче хулари пионерсемпе комсомолĕцсен вăйĕпе концерт пулат.

Ответлă редактăр Н. М. ҪЕМЕНĂВ.

Амбарсенче сийен тăвакан кайăк-кĕшĕксемпе кĕрешекен организацин Чăваш уйрăмне кирлĕ:

бухгалтĕр помошникĕ
ҫекретар-машинисткă

Ĕҫукçи килĕшӳ тăрăх.
АДРЕС: г. Чебоксары, улица Карла Маркса, д. 4.

Селђхозснабжениинчен укҫа илме тивĕҫ колхозсене

ПĔЛТЕРЕТПĔР:

Селђхозснабжении уйрăмĕсене колхозсене тӳлемели укҫашăн нойабĕр уйăхĕнче тавар парса татма йе кирлĕ тавар ҫук пулсан хуҫисене укҫан тавăрса пама хушнă.

Илмели укҫана ҫав вăхăтра ыйтса илмесен, вăл Селђхозснабжении доходне кĕрет.

Селђхозснабжении Чăваш кантурĕ.

„ЧĂВАШ КОММУНЕ" ҪЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ: ПĔР УЙĂХА 2 т. 50 пус 3 УЙĂХА 7 т. 50 п., 6 УЙĂХА 15 т. ҪУЛТАЛĂКА 30 тенкĕ. ПОДПИСКĂНА ҪЫХĂНУ УЙРĂМĔСЕМ, ПИСМОНОҪЕЦСЕМ ЙЫШĂНАҪҪĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 557. Гор. Чебоксары, типография № 1 [illegible] ЧАССР, заказ № [illegible]